Чебокс... Ц. Б. им. Горьк... 0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АПРЕЛ 12 ЫТЛАРИКУН
84 (4897)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухат ● ПСН(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйăн 6—23

Виçĕ республикă ăмăртăвĕнче çĕнтерекенни пулассишĕн

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе колхозсемпе совхозсем иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илни пирĕн социалисăмла тăван çĕршыври ĕçсывнисен чĕрисене тулли телейлĕ туса, йалхуçалăхĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешме хавхалантарат. Татах та пысăк çĕнтерӳ тăвассишĕн, 1938 çулта татах та вăйлă рах тырпул туса илессишĕн колхозлă йалта социалисăмла ăмăрту йухăмĕ вăйлăн та анлăн саралса пырат.

1938 çулта халиччен нихăçан пулман вăйлă тырпул туса илме мĕн кирлисем колхозлă хресченсен аллинче пурте пур. Социалисăмла йалхуçалăхĕ малта пыракан техникăпа хĕçпăшаллашнă. Колхозсенче тата МТС-сенче вăйлă тырпулшăн, стаханăвла ĕçтухăçлăхĕшĕн кĕрешӳ опычĕ те пит пысăк. Колхоз уй-хирĕнче ĕçлесе пиçнĕ стаханăвçсем пиншерĕн хисепленеççĕ. Вăйлă тырпул маçтăрĕсен ĕç тĕслĕхĕсем социалисăмла йалхуçалăхĕ пит пысăк утăмпа малала кайма пултарнине уççăн кăтартса тăраççĕ.

„Халь ĕнтĕ, колхоз стройĕ малтанхи çимĕçсене панă май, пирĕн тырпул тухăçĕ хăварт çӳлелле кайса пынă чух, колхозсемпе совхозсем ура çине тăрса çирĕпленнĕ хыççăн, халь ĕнтĕ вĕсем пĕтĕм йалхуçалăх, çав шутрах выльăх-чĕрлĕх продукцине те ӳстерме пултарассинче хăйсене аван кăтартĕç“ (В. Молăтăв).

Колхозлă йалăн çĕнĕ квалификацилĕ кадрĕсем — бригадирсем, звеньевойсем, трактăрисемпе трактăрискăсем, машинисемпе комбайнерсем, шоферсемпе штурвальнăйсем, вăйлă тырпул маçтăрĕсемпе опытникĕсем 1938 çулхи ĕç тĕлĕшпе кашнийех хăйсем çине çĕнĕ обиазатĕлствăсем илеççĕ. Вĕсен пурин те пĕр шухăш—1938 çулта татах лайăхрах ĕç тĕслĕхне кăтартасси. Колхозлă йал умĕнче тăракан задачă 1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен планне иртерсе тултарасси.

Апрелĕн 5-мĕшĕнче, Хусанта, виçĕ тăван республикăри колхозлă йалсен представителĕсем 1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен планне тултарас тĕлĕшпе пĕр-пĕрине социалисăмла ăмăртса ĕçлеме догăвăр çирĕплетрĕç. Виçĕ республикă ăмăртăвĕнче—Чăваш, Тутар тата Мордва республикĕсен ăмăртăвĕнче — 1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕпе мала тухассишĕн кĕрешӳ пит вăйлă пулассин малтанах курăнса тăрат. Тутар республикĕ—орденлă республикă. Тутар колхозникĕсем ĕçлеме йуратаççĕ, вĕсем ăмăртура мала тухассишĕн халех пит вирлĕн кĕрешме тытăнчĕç. Мордва республикĕ те пĕртте кайа йулассăн мар. Чăваш республикĕ—виçĕ республикă хушшинчи ăмăртăва пуçарса йараканни. Çакă ĕнтĕ, ăмăртăва пуçаракансем чăваш колхозникĕсем пулни, пирĕн Чăваш республикĕ çине уйрăмăнах пысăк ответлăх хурат, уйрăмăнах вирлĕн ĕçлеме хушат.

1937 çулхи йалхуçалăх çулĕн итогĕсене илсен, ăмăртăва хутшăннă виçĕ республикăн кашнинех уйрăм ĕçсем йенĕпе пысăк çитĕнӳсем пулнине палăртма пулат. Чăваш республикĕ вăтам шутпа гектартан 15,6 центнĕр тĕштырă туса илсе, Совет Сойузĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă пулсан, Тутар республикĕнчи МТСтанцисем вăтам шутпа кашни трактăрпа 828-шар гектар сухаласа Совет Сойузĕнче малта пыракансен ретне кĕнĕ. Çавăн пекех тата Мордва республикĕн техникăла куљтурăсене, пуринчен ытла кантăр акса тăвас ĕçре пысăк опыт пур. Виçĕ республикă хушшинчи социалисăмла ăмăрту кашни республикăн паха опычĕсене пĕр-пĕрин патне куçарса пырса йалхуçалăх йенĕпе пурĕ пĕрле татах та пысăк çитĕнӳ тăвас тĕлĕшпе пит кирлĕ пулса тăрат.

Çураки вăхăчĕ виçĕ республикăн социалисăмла ăмăртăвĕнче кам-мала тухассине татса паракан тапхăр пулса тăрат. Çавна кашни колхозникăн, кашни çĕрĕç работникĕн тĕплĕн ăнланса илмеле.

Çуракине тухас вăхăт çывхарса çитрĕ. Чăваш республикĕнчи колхозсен çуракинче пурĕ 416 пин гектар ытларах кĕске срукра та та лайăх пахалăхпа акса хăвармала. Кăнтăр йенчи районсем клевĕр акма тухрĕç те, çак кунсенчех кĕр сухисене сӳреме, ирхи тĕштырăсене акма тытăнаççĕ. Анчах та, социалисăмла ăмăрту догăвăрĕнче кăтартнă пек çуракине иртерме мĕн кирлине пурне те туса çитернĕ тесе епĕр пайан кун та калама пултараймастпăр. Трактăрсене вальли çунтармалисене хатĕрлес плана апрелĕн 5-мĕшне пĕтĕмĕшпе 70 процент çеç тултарнă. Çĕре çемçетмели вырăнти йапаласене хатĕрлемели плана—тислĕк йенĕпе 77 процент, кĕл — 52 процент, торф—90 процент çеç тултарнă. Хăшпĕр районсенче чылай колхозсем вăрлăхсене те суртласа çитереймен.

Çуракине ăмăрту догăвăрĕнче кăтартнă пек 6—8 кун хушшинче иртерес ĕçре лаша вăйĕ те пит пысăк вырăн йышăнса тăрат. Çапла пулсан та хăшпĕр колхозсенче лашасене кирлĕ пек пăхмаççĕ.

Бригадă колхоз производствинче тĕп вăй пулса тăрат. Калас пулат, республикăра уй-хир ĕç бригадисене организацилесе çитермен, вĕсем çумне уйрăм çĕр участкисем çирĕплетсе паман, бригадăри сынсене уйрăм ĕçсем çумне çирĕплетсе хуман колхозсем те пур-ха.

Парти тата совет организацийĕсем халь колхозниксен, МТС тата çĕрĕç работникĕсен пĕтĕм вăй-хăвата çуракине кар тухмала тăвас ĕçе, çуракине лайăх пахалăхпа иртерес ĕçе конкретлăн организацилемеле, социалисăмла ăмăртăвăн пĕтĕм вăйне çавăнта хумала.

Пирĕн Чăваш республикĕнчи колхозсен вăйлă тырпулшăн кĕрешес опыт пысăк. Кадрсем çителĕклĕ. 1938 çулта нихçан пулман вăйлă тырпул туса илме, виçĕ республикă ăмăртăвĕнче мала тухма мĕн кирли пурте пур. Колхозниксен массине мобилизацилесе кашни ĕç участкинче социалисăмла ăмăртăва большевикла организацилесе йертсе пыни çеç кирлĕ. Колхозсенче тата МТС-сенче ĕçлекен коммунистсемпе комсомолĕцсен, парти работникĕсен—райком çекретарĕсенчен пуçласа МТС директăрĕсен политикă йенĕпе ĕçлекен замеçтителĕсен, партком çекретарĕсен, парторгсен массăлă-агитацилĕ ĕçе анлăн сарса йарса, вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре йертсе пыраканĕсем пулса тăмала.

Пайан пичетлесе кăларакан виçĕ республикă хушшинчи ăмăрту догăвăрĕнче 1938 çулта мĕнле агротехникăла ĕçсем тумалине, 1938 çулта вăйлă тырпул туса илме мĕн-мĕн тумалине пурне те кăтартса панă. Парти тата совет организацийĕсен çав догăвăра кашни колхоза çитермеле, ун çинчен кашни колхозник пĕлсе тăракан тумала.

Ăмăрту хĕрӳлĕхне вăйлатса, ăна массăсем хушшинче чунпа-чĕрепе туймала туса, виçĕ республикă ăмăртăвĕнче çĕнтерекенни пулассишĕн вирлĕн кĕрешер!

1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен планне тултарас тĕлĕшпе Тутар, Чăваш тата Мордва Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕсем хушшинче тунă социалисăмла ăмăрту

ДОГĂВĂРĔ

Иртнĕ йалхуçалăх çулĕн итогĕсем колхозлă стройăн çирĕп вăйне тата организацилĕхне кăтартса пачĕç. Большевикла парти йертсе пынипе Совет Сойузĕнчи колхозлă хресченсем вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре питĕ те пысăк çитĕнӳсем турĕç.

Пĕтĕм Совет çĕршывĕпе пĕрле Мордва АССР, орденлă Тутар тата Чăваш республикĕсенчи колхозниксемпе колхозницăсем вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре 1938 çулта çĕнĕ, татах та пысăкрах çитĕнӳ тума хăйсен умне задачă лартаççĕ.

Халăхсен çулпуçĕ **Сталин** йулташ çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илме кирли çинчен кăтартса панине тĕпвырăна хурса, Тутар, Мордва тата Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикăсенчи совхозсемпе МТС-сенчи рабочисем, колхозниксем тата колхозницăсем, йалхуçалăх специалисĕсем 1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен планне ăнăçулăн тултарас тĕлĕшпе социалисăмла ăмăрту догăвăрĕ туса, хăйсем çине çакăн пек обиазатĕлствăсем илеççĕ:

I. Йалхуçалăх ĕçĕсене пурне те лайăх иртерсе, 1938 çулта тырпул тухăçне çакăн чухлĕ илмеле:

	Тутар республикĕ тăрăх	Чăваш республикĕ тăрăх	Мордва республикĕ тăрăх
1. Мĕнпур тĕштырăсене гектартан	15 центн.	100 пăт	100 пăт
2. Пăрçалă тырăсене	10 „	—	—
3. Хĕвелçавăрнăш	7,5 „	—	—
4. Йĕтĕн сӳсĕ	4,0 „	4,5 цент.	—
5. Кантăр сӳсĕ	5,0 „	5 „	5 цент.
6. Клевĕр вăрлăхĕ	2,5 „	2,5 „	2,0 „
7. Çĕрулми	150 „	150 „	150 „
8. Чĕкĕнтĕр, хăйар	15 тоннă	—	—
9. Сухан	11—12 „	—	—

II. Агротехникăла ĕçсем тĕлĕшпе çакăн пек ĕçсене тума пулатпăр: *)

	Тутар республикĕ тăрăх	Чăваш республикĕ тăрăх	Мордва республикĕ тăрăх
1. 1938 çулта колхозсен уй-хирне тислĕк кăлармала	20 мĕлйун тоннă	10 мĕлйун тоннă	6 мĕлйун тоннă
2. Ир акмали пучахлă тата пăрçалă культурăсене акса пĕтермеле	6—8 кун хушшинче	6—8 кун хушшинче	8—12 кун хушшинче
3. Çурхи тĕштырăсен вăрлăхне йаровизацилесе акмала	500 пин га	100 пин га	240 пин га
тата çĕрулми	16 „ „	—	—
4. Çурхи тĕштырăсене суртлă тата вырăнти лайăхлатнă суртлă вăрлăхпа акмала	100 процентчĕпех	244 232 га	203.963 га
5. Тутар, Чăваш тата Мордва республикисенче çуртрисене пĕтĕмпех ретлĕ çейăлкăсемпе акса хăвармала.			
6. Кĕрхи тырăсене çуркунне сӳремеле	600 пин га	150 пин га	200 пин га
7. Мулчировани тумала (сармали лаптăк)	30 пин га	пĕтĕм лаптăкран 25%	—

8. Çуртри тата кĕрхи тырă вăрлăхĕсем государствă йышăннă кондицирен кайа мар пулмала. Пĕтĕм вăрлăха трийĕр витĕр тĕплĕн тасатса кăларса, вутпуççирен чӳкесе акмала.

9. Калчасене пурне те икĕ хутран кайа мар çумкурăксенчен тасатмала, çĕрулмипе тымарçимĕççене кăпăшкалатса тухса купаламала, пĕтĕм уй-хире çумкурăксенчен таса тытса тăмала.

10. Ийунĕн 1-мĕш тĕлне Тутар республикĕ тăрăх çĕртме уйĕнче 100 процентчĕпех, Чăваш республикĕ тăрăх 85 процент лаптăк çинче, Мордва республикĕ тăрăх 200 пин гектар ирхи çĕртме сухи туса çитермеле; ирхи çĕртме сухи тунă лаптăка лайăх пăхса тăрса, çумкурăкĕсенчен тасатсах пымала.

11. Кĕрхи тырăсене Тутар республикĕ тăрăх августăн 25-мĕшĕнчен кайа йулмасăр, Чăваш тата Мордва республикĕсем тăрăх августăн 28-мĕшне акса пĕтермеле.

12. Суха ĕçне пурне те (çурхи сухана, çĕртме тата кĕрхи сухана) пысăк пахалăхпа, шăйрăксăр, 16—18 сантиметр тарăнăшĕнчен кайа мар сухаласа иртермеле.

13. Кĕрхи тата çурхи тырăсене лобогрейкăсемпе тата жнейкăсемпе 12 кун хушшинче, комбайнсемпе 20 кун хушшинче вырса пуçтарса кĕртмеле, пăрçалă культурăсене 7 кун хушшинче пуçтарса кĕртмеле.

14. Тăкакланнипе кĕрешес тата тырпула сыхлас тĕлĕшпе тырра машинăсемпе вырса пăрахнă хыççăнах кĕлтене çыхса, çĕмеле хывмала. Вырнă хыççăн кĕлтене çыхмасăр выртарни пулмала мар.

15. Тырă вырса пĕтернĕ хыççăн 12 кунтан мала йамасăр кĕлтесене пĕтĕмпех капана хывса çитермеле.

16. Тырă вырма тухсан 4—5 кунтан авăн çапма тытăнса, октйабĕрĕн 15-мĕшне пĕтĕмпех çапса пĕтермеле.

17. Тăкаксăр пуçтарса кĕртес тĕлĕшпе тырă вырмали кашни машинă çумне тырă пĕрчи пухмалисем лартмала. Вырса пуçтарса илнĕ хыççăн пĕтĕм лаптăк çинче лашапа тата алăпа ĕçлемели кĕреплесемпе пучахсене пуçтарса илмеле. Кĕлте турттармали урапасене пурне те шăналăк, хуп йе хăма сармала.

18. Çăмăр пулсан та авăн çапас ĕç чарăнмала ан пултăр тесе, кашни бригадăрах витнĕ итем тумала. Витнĕ итемсен пысăкĕшĕ пĕр сложнăй молотилкăпа 4—5 кун хушши авăн çапса тăмалăх кĕлте кĕрекен пулмала.

19. Кашни колхозрах тырă типĕтмели тата комбайнран пушатнă тырра куштарса типĕтме витнĕ вырăнсем тумала.

20. Витнĕ итемсемпе тырă типĕтмелисене тата тырă куштармали витнĕ вырăнсене 1938 çулхи ийулĕн 1-не туса пĕтермеле.

21. Техникăла культурăсене çак срукsenче пуçтарса кĕртмеле:

а) сӳс тумали йĕтĕне 8 кун хушшинче тасатса пĕтермеле;

б) кантăр пусине—10 кун хушшинче;

в) сӳс тума йĕтĕне çентйаберĕн 25-мĕшне çитиччен сарса (йе хутса) пултармала, кантăр çурăмĕсене татса кĕртсенех хутса, октйабĕрĕн 10-мĕшне кăлармала тумала.

22. 1939 çулта çуртри акмали пĕтĕм лаптăка Тутар тата Чăваш республикĕсем тăрăх октйабĕрĕн 1-мĕшне, Мордва республики тăрăх октйабĕрĕн 5-мĕшне кĕрсухи туса хăвармала.

23. Государствă умĕнчи обиазатĕлствăсене—тырă тăратассине, ссудă тавăрса парассине, натурплатăна, контрактаци догăвăрĕсем тăрăх техникăла культурăсене, пахча-çимĕç тата çĕрулми тăратассине правительствă кăтартса панă срукчен тултармала.

24. Кашни трактăр отрйадĕнчех пĕрререн кайа мар культурлăн тунă вакун пулмала.

25. Пухса кĕртекен тырра учота илсе пырса, кирлĕ пек сыхласа тăмала.

III. Трактăриссем, бригадирсем, комбайнĕрсем, механиксем, штурвальнăйсем, помошниксем, авăн çапмали машинăпа ĕçлекен машиниссем, совхозсенчи рабочисем, колхозниксемпе колхозницăсем, совхозсенчи тата МТС-сенчи специалиссем хăйсем çине 1938 çул вальли çакăн пек обиазатĕлствăсем илеççĕ:

	Тутар республикĕ тăрăх	Чăваш республикĕ тăрăх	Мордва республикĕ тăрăх
1. 15 лаша вăйлă кашни трактăр пуçне (авăн çапнипе çул çинче ĕçленине шута кĕртмесĕр)	950 гект.	700 гект.	800 гект.
2. ЧТЗ трактăрпа сухалама	2400 „	2000 „	2000 „
3. У-2 „ „	600 „	—	—
4. 15 фут сарлакĕш илекен комбайнпа 20 кун хушшинче пухса кĕртме	400 „	300 „	350 „
5. МК—1100 молотилкăпа 60 кун хушшинче çапма	1100—1200 тоннă	1000 тоннă	800 тоннă
6. Трактăр ĕçĕн хакне планпа пăхнинчен çакăн пек хисепрен кайа мар чакармала	5 проц.	3 проц.	3 проц.
6. Çунтармалисене государствă йышăннă нормăран çакăн чухлĕ перекетлемеле	10 „	3 „	5 „

IV. Çак догăвăрта кăтартнă обиазатĕлствăсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен пĕр-пĕрипе çак срукsenче тĕрĕслемеле:

Пĕрремĕш хут—ийунь уйăхĕн варринче;

Иккĕмĕш хут—август уйăхĕн варринче;

Виççĕмĕш хут—нойабĕр уйăхĕн варринче;

Ăмăрту арбитрĕ пулма „Правда“ тата „Социалистическое Земледелие“ хаçатсене суйлас.

Догăвăр çине алă пуснă:

Тутар республикĕнчен 65 çын.

Чăваш республикĕнчен 8 çын.

Мордва республикĕнчен 6 çын.

Хусан, Тутар АССР.

1938 ç. апрелĕн 5-мĕшĕ.

*) Йалхуçалăхĕнче малта пыракансен Чăваш республикинчи слăочĕ кунта кăтартнисемсĕр пусне Чăваш республики тăрăх тата çакăн пек обиазательствăсем йышăннă:

Махоркă гектартан 20 центнĕр илме;

Уйа 1 мĕлйун тоннă торф кăларма;

Кĕрхи тулă тата йĕтĕн акнă лаптăкран 25 процент çинче калчасене апат пама.

Парти организацисен отчотпа суйлав пухăвĕсем

(Мускав)

Мускаври предприйатисенче парти организацисен отчотпа суйлав пухăвĕсем пулса иртеççĕ. „Красная роза“ комбинатри парторганизацин отчотпа суйлав пухуне 189 член тата 56 парти кандидачĕ пынă.

Партком çекретарĕ Колотушкин йулташăн доклачĕ икĕ сехете йахăн пынă. Вăл хăйĕн докладĕнче çакна палăртнă: отчотлă тапхăрта парти членĕсемпе кандидачĕсен политикăлă активлăхĕ чылай ӳснĕ, производствăри чи лайăх стаханăвĕçсене парти ретне илнĕ, вĕсем Ленин—Сталин ĕçне вĕçĕмсĕр йуратса тăраççĕ. Парти организацийĕ парти ретне троцкисла-бухаринла бандитсенчен тасатас тĕлĕшпе пысăк ĕç туса иртернĕ. Çапах та, партком ĕçĕнче пысăк йанăшсемех пулнă, ĕçе тĕплĕн тĕрĕслемесĕрех тӳрĕ кăмăллă коммуниссене партирен кăларнă.

Пренисенче тухса калаçма 33 çын çыраннă. Тухса калаçакансем ирĕклĕ обшчĕствăсем йапăх ĕçленине палăртнă, техникăлă вĕренӳ ыйтăвĕсем çине тата çĕнĕ кадрсем ӳстересси çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхманшăн парткома хытă критикленĕ.

Апрелĕн 10-мĕшĕнче „Красный богатырь“ савăтри парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕ пуçланнă. Пухура партин 430 членĕпе 105 кандидачĕ пулнă. Прениsenче тухса калаçакансем партком производствă ыйтăвĕсенче сахал ĕçленине, савăтра производствăлă дисциплинăна çирĕплетессишĕн йапăх кĕрешнине палăртнă.

Отчотпа суйлав кампанине столицă районĕсенчи 22 парторганизаци хутшăннă.

(ТАСС).

Çĕне йышши комбайн

Днепропетровскри „Коммунар“ савăтра 40 фут сарлакĕш илекен комбайн пройектне туса хатĕрленĕ. Ку комбайнпа пысăк тухăçлă тырпулсене пухмала. Унăн ĕç тухăçлăхĕ „Коммунар“ комбайнĕнчен виçĕ хут, „Сталинец-1“ комбайнĕнчен—икĕ хут ытла пулат.

Çак çĕнĕ комбайн çинче йатарласа тунă улăм пухса пыраканни пулат, вăл улăмпа арпана уйрăмăн пухса пыма май памала.

Çĕнĕ йышши икĕ комбайна савăт кăçалхи тырпулсене пухса кĕме пуçланă тĕле туса кăларат.

(ТАСС).

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Китай çарĕсем Цзинаньре

ЛОНДАН, апрелĕн 9-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви радиопа пĕлтернĕ тăрăх, Китай командованийĕ çапла каласа панă: Китай çарĕсем Цзинань хулин (Шаньдун провинцин центрĕ) хĕррисене кĕнĕ, хула урамĕсенче йапонецсене хирĕç çапăçаççĕ. Унта çапăçакан Китай çарĕсем икĕ ерне кайарах Китайăн—Великий каналĕ урлă каçнă ушкăнăн пĕр пайĕ пулса тăраççĕ. Çав ушкăнăн тепĕр пайĕ, Йапонин Çуйчжоу патĕнче çапăçакан çарĕсем çине тылран пырса тапанма, кăнтăр йеннеле кайнă.

Чехословаки правительстви хăйĕн çĕршывĕнчи халăхсене чĕнсе калани

Генлейн партийĕ (Гитлĕрăн Чехословакири агентури) Чехословакири халăхсем хушшинче шанманлăх, шиклĕх тата хăраса ӳкес шухăш-кăмăлсем сарас тĕллевпе тĕрлĕ провокацисене анлăн тума хăтланат. Прагăри хаçатсем Чехословаки правительстви хăйĕн çĕршывĕнчи халăхĕсене официаллă чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă. Правительствă халăхсене çав „пăшăлтатса елек сарса çӳрекенсемпе“ тата суйа сăмахсем саракансемпе кĕрешме чĕннĕ, çавăн пеккисем çинчен административлă мерăсем йышăнма полицине пĕлтерме ыйтнă.

(ТАСС).



РЕСПУБЛИКĂЛĂ ИСПАНИРЕ.

Ӳкерчĕк çинче: Миаха генерал тата Каталони президенчĕ Компанис (сылтăмра) Барçелонăра. (Сойузфото).

Франциri предприйатисенчи забастовкă

ПАРИЖ, апрелĕн 9-мĕш. (ТАСС). Париж районĕнчи машинăсем тăвакан промышлĕннăç хуçисен организацийĕ ĕнер ĕç министрĕ патне çыру йанă. Вĕсем вăл çырура: забастовкă тăвакансем предприйатисенче пулнă чух нимĕнле калаçуа та хутшăнмастпăр, çавăн пекех ĕç-укçине те нимĕн чухлĕ те ӳстермеспĕр, тесе пĕлтернĕ. Савăтсен хуçисен çак провокацилĕ ĕçне хирĕç ответлесе „Испано-Сойузăн“ Парижри савăчĕсенчи 1.500 çын, Сан-Денири генеральнăй строительнăй компани рабочийĕсем 1050 çын, Женевилйери (Парижăн хĕрринелли вырăнĕ) автомобил савăчĕсенчи 900 рабочи тата тĕрлĕрен вакă предприйатисенчи çĕршер рабочисем забастовкă тума пуçланă. Предприйатисене йышăнса тăрса стачкă тăвакан рабочисем пурĕ 60 пине йахăн шутланаççĕ.

Пĕтĕмĕшлĕ ĕç конфедерацин бӳровĕ воззвани пичетлесе кăларнă, çав воззванире вăл халĕхи вăхăтра пулса иртекен забастовкăшăн ответлăха хапрăк-савăт хуçисем çине хурат.

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтра пăлхавçăсем Каталони патнелле малала кайма тăрăшаççĕ. Анчах та республикă çарĕсем, подкреплениsem илсе, вĕсене малала кайма памаççĕ. Хальхи вăхăтра фронт линийĕ Ебро йуханшывĕ тăрăх иртсе пырат. Çыран хĕрринчи çӳлĕ вырăнсенче тата траншейăсемпе çирĕплетнĕ вырăнсенче республикăн малти ретре вăрçса пыракан чаçĕсем тинĕс хĕрне тухмали çулсене хӳтлесе тăраççĕ. Пăлхавçăсен колоннисем наступлени тăвасси чакнă.

Центрти фронтра, Естремадура районĕнче пăлхавçăсен çарĕсем Карраскальйехо йатлă йал çине атакă тунă. Ку йал тавринче хайар çапăçусем пыраççĕ.

Ытти фронтсенче лару-тăру улшăнман.

* * *

Республикăн гидросамолĕтчĕсем апрелĕн 9-мĕшĕнче фашиссен шыв айĕн çӳрекен киммисене тапăннă. Вăл кимĕсем Альмери шывĕсенче ишсе çӳренĕ пулнă. Çав кимĕсене шыва путарнă пуль, теççĕ. Гидросамолĕтсем фашиссен шыв айĕн çӳрекен киммисем урăх пуррине палăртман.

Франциri çĕнĕ правительствă

Парижрен пĕлтернĕ тăрăх, Даладйе Францин çĕнĕ правительствине тунă. Правительствă составне çаксем кĕреççĕ: 6 радикал, 6 радикал-социалис, социалисла республикăлă сойузăн 3 членĕ, ытти партисенчен 3 представителĕ тата партире тăманнисем—1 çын.

Министрсен Совечĕн председателĕ тата нацилĕ оборонă министрĕ—Даладйе (радикал-социалис).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Партин йертсе пыракан органĕсене суйлама хатĕрленеççĕ

Шупашкар районе

Партин йĕртсе пыракан органĕсен суйлавĕсене ирттересси çинчен парти Тĕпкомĕ йышăннă постановленине районри парти активĕн пухăвĕнче сÿтсе-явнă. Пуху активлăн иртрĕ. Пренире тухса калаканçем парти райкомĕн ĕçĕнчи чылай çитменлĕхсене палăртнă. Райком инструкторĕсем парторганизацисене сахалтарах пулаççĕ. Вĕсем парторганизацисене кайсан та, пуçламăш парторганизацисем партипе-политикăлă ĕççене мĕнле йĕркелени çинчен интересленмеççĕ. Парторгсене пырăнта пулăшу памаççĕ. Инструктăрсем ниçтан ытла жалăбăсене тĕрĕслесене ĕçлеççĕ.

Пуху парти йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене ирттермели плана пăхса тухнă. Ку план тăрăх пуçламăш парторганизацисене кандидатсен группинчен отчетна суйлав пухăвĕсем апрелĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа майăн 8-мĕшне çитиччен пымала. Райком отчетĕсем апрелĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа, 29-мĕшĕнче пымала.

Парти организацисене отчотна суйлав пухăвĕсене хатĕрлеме пулăшма районри парти активĕн членĕсене 40 çын уйăрнă. Апрелĕн 9-мĕшĕнче парти райкомĕ вĕсемпе канашлу иртрĕ.

Район инструкторĕсем те парти пуçламăш организацисене отчотна суйлав пухăвĕсене хатĕрлеме пулăшассине ĕçлеççĕ. Галицин йул. Иккассинчи пуçламăш парторганизацинче, Петров йулташ Альгешри парторганизацинче, Абрамăн йулташ райĕçтăвком сумĕнчи парторганизацинче ĕçлет.

Районри отчотна суйлав пухăвĕ майăн 14-мĕшĕнче пулат.

Патăрьел районĕ

Патăрьел районĕнче халĕхи вăхăтра парти йĕртсе пыракан органĕсене суйламали инструкцине парти Тĕпкомĕ постановленине кружоксенче вĕренме тытăннă.

Парти активĕн пухăвĕ пăхса тухнă план тăрăх парти пуçламăш организацисенче отчотна суйлав пухăвĕсем апрелĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа майăн 1-мĕшĕччен ирттереççĕ. Апрелĕн 15-мĕшĕнче парти райкомĕ пуçламăш парторганизацисене отчотсем тума тытăнат.

Тутаркас районе

Партин пуçламăш организацисенчи отчотна суйлав пухăвĕсем апрелĕн 20-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Парти райкомĕ отчĕĕ пур парторганизацисенче те пулмала.

Тутаркас районĕнчи парторганизацисем парти йĕртсе пыракан органĕсен суйлавĕсене ирттерес ĕçе çителĕксĕр хатĕрленеççĕ. Парти Тĕпкомĕ постановленине икĕ парторганизацинче кăна сÿтсе явнă. Парти райкомĕ парторганизацисене отчот туна хатĕрлесе çитмен.

Йĕлчĕк районе

Партин пуçламăш организацисенче та кандидатсен группинсене ПСК(б)П Тĕпкомĕ парти йĕртсе пыракан органĕсен суйлавĕсене ирттересси çинчен йышăннă постановленине сÿтсе-явассĕ. Апрелĕн 8-мĕшĕнче парторгсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура парти йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене ирттересси çинчен парти Тĕпкомĕ йышăннă постановленине тата парти Обком пленумĕн решенисене сÿтсе-явнă.

Пуçламăш парторганизацисенчи отчотна суйлав пухăвĕсем апрелĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа, майăн 1-мĕшне çитиччен пымала.

Вăрмар районĕнче парти Тĕпкомĕн решенине тĕрĕс ăнланман

Парти Тĕпкомĕ йышăннă тăрăх пуçламăш парторганизацисенчи отчотна суйлав пухăвĕсем апрел уйăхĕнче пуçласа майăн 15-мĕшне çитиччен пымала. Вăрмар районĕнче пуçламăш парторганизацисем 12, кандидатсен группине 5.

Отчотна суйлавсене ирттермели план тăрăх райкомăн отчотĕ апрелĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен пымала. Çапла вара парти райкомĕ 4 кун хушшинче 17 парторганизацине отчот туса ирттересшĕн. Кун тивĕççĕ хăвартлăх.

Пĕр колхозри парторганизацин ĕçĕсем

ШАХАСАН. 1937 çулта Вăрман-Кнцекри Куйбышев йачĕпе тăракан колхозри кандидат группинче парти членĕ пĕр çын тата икĕ кандидат пулнă. Çав çулах Иванов, Христофоров, Дмитриевĕн йулташсене сочувствующинче илнĕ. Вара парторг Абрамăн йулташ çак çамрăк кадрсене парти ретне илме хатĕрлесе пынă.

Унтапа чылай ÿсĕмсем пулчĕç. Андрей Иванов, Сергей Христофоров йулташсем—сочувствующисем парти кандидатне кĕчĕç. Камсем-ха вĕсем? Андрей Иванов виçĕ çул хушши колхоз бригадирĕнче ĕçленĕ. Унăн бригади йалапах малта пынă. 1938 çулта ăна Уйкас-Кипек йалсовет председательне суйласа лартнă. Халĕ Иванов йулташ йертсе пыракан йалсовет районра лайăх ĕçлекен йалсоветсенчен пĕри шутланат. Ивановна вĕрле парти кандидачĕ Федăрăн йулташ йалсовет секретарĕнче ĕçлет.

Парти кандидатне илнĕ Сергей Христофорăн йулташа колхоз бригадирĕнче ĕçлевĕ. Халĕ вăл Шупашкарти Коммунисла йалхуçалăх аслă шкулĕнче вĕренет. Кандидата илнĕ Сергей Тихăнăн йулташ чылай вăхăт хушши Уйкас-Кипекри йалпредседательне ĕçлет. Тихăнăн йулташ йертсе пынипе ку йалпо тавараçнăрăн планне пурнăçлас йенĕпе, тавар илекенсем хушшинче ĕçлес тата строительства йенĕпе районра чи малта пыракан йалпо пулса тăрат. Ахальтен мар ăна потребитĕл ушкăнĕн членĕсем отчот итлемĕ хыççăн пĕр уйăхлăх ĕçукçине премилерĕç.

Парторг Абрамăн партине çĕнĕрен илнĕ йулташсен политикăла пĕлĕвне хăпартассишĕн тăрăшат. Парти кунĕсемпе пухăвĕсене вăхăтра ирттерет. Пурте парти нотурине лайăх вĕренеççĕ.

Халĕ партипе кĕме заявлени паракансем татах пур. Акă, заявлени панă Павел Пакăлĕн йулташа илсе пăхар. Вăл хресчен çемйинче çуралса ÿснĕ. 1930 çултанпа комсомолта тăрат. 1932—34 çулсем хушшинче колхозра бригадир пулса ĕçленĕ. 1934 çултанпа йалсовет членĕ. 1935 çулта Хĕрлĕ Çара кайас вăхăтчченех йалсовет секретарĕнче ĕçленĕ. Хĕрлĕ Çартан таврăннă кунтанпа халĕхи вăхăтчченех Куйбышев йачĕпе тăракан колхоз председателĕ, çак вăхăтрах комсорг пулса ĕçлет. Ăна колхозниксем хисеплеççĕ.

Кăçал колхоз Тельмăн йачĕпе тăракан колхозпа ăмăртăва тухрĕ. Халĕ бригадăсемпе уйрăм колхозниксем хушшинче ăмăрту саралсах пырат. Кăçалхи çуракине ирттерме вĕсем пур йенчен те хатĕрленсе çитнĕ. Колхозниксен çак кунсенче пулса иртнĕ пухăвĕнче кашни колхозник уйрăм ĕç çурăмне çирĕплетнĕ. Стена хаçачĕ кăларакансемпе агитаторсене те уйăрса хунă.

Колхозра культурăпа-массăлă ĕç çĕнĕ шайра тăрат. Халĕ агрокружоксем тата суйлав Положенийĕне вĕрентекен 5 кружок ĕçлеççĕ.

Ваç. Чернов.

Виçĕ уйăх хушшинче пĕр пуху

Комсомолăн Чăвашпромсоюзри пуçламăш организацийĕ Шупашкар хулинчи пысăк пуçламăш организацисенчен пĕри шутланат. Ку организаци пĕлтĕрех йенĕпе те предприйатисенчи организацисенчен çулти выранта тăрат. Вăл организаци пĕрлештерсе тăракан комсомолецсенчен 90 процентне вăтам шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Апла пулсан кунта комсомол ĕçĕ ытти ăйăх ăнлăлăхпа пулса пырат пулĕ темелле. Çук. Апла пулса тухман.

Иртнĕ виçĕ уйăх хушшинче комсомолецсен пухăвĕ те пухăнман. 1938 çулхи январĕнче пĕррĕмĕш пуху апрелĕн 7-мĕшĕнче ПСЛКС Тĕпкомĕн 5-мĕш пленумĕн решенисене сÿтсе-явма ытупа пулса иртрĕ. Пухура комсомол пуçламăш организацинче воспитани ĕçĕ вăрахланни йăлăшсене тĕрлетес тĕлĕшпе сĕрĕкĕн ĕçлени питех те уçсăн палăрчĕ.

Кунта комсомолецсем политикă кружокĕсене йĕркелĕ çÿремеççĕ. Комсомолец Котелков йулташ виçĕ уйăх хушшинче пĕр заняти те пулман. «Чăваш трикотаж» фабрикине иĕлтмес кружокне йертсе пыма уйăрнă Кириллăн комсомолец ку фабрикăнче те кружока организацилемен. Комсомолецсен хаçачĕ çамрăксене вăхăтра ыйтса тухман.

Халĕхи вăхăтра пĕтĕм ĕçсынинсем РСФСР, Чăваш АССР Конституцисене тата суйлав Положенийĕне вĕренеççĕ, суйлава хатĕрленеççĕ. Комсомолец Чăвашпромсоюзри организацийĕ ку йенĕпе те нимĕн те туман. Массăлă агитаци ĕçĕ çук. Сопиалисăмла ăмăртупа стахановла йухăма вайлатассишĕн тăрăшмаççĕ. Пикам та ăмăртса ĕçлемест. Оборона ĕçĕ те сÿнсе ларнă. Ворошиловла тĕл персекенсен, ПВХО кружокĕсене организацилемен. Стенăа хаçачĕ те йĕркелĕ тухса пымаст.

Комсомол организацин ĕçĕ çавнашкал ÿрĕк-сÿрĕк пулса пынипе та, çитĕ купта комсомол йышĕ те ÿсмест. Çамрăксене комсомола йапăтасассипе ĕçлеме мар, комсомолра тăракан çамрăксене те пулăшу памаççĕ. Акă, Михайлăв йулташ комсомолецăн ĕçне илер. Михайлăв йулташ 1938 çул пуçламăшĕнче, хăйне пропагандистăн членне суйлана хыççăн, Чăваш промсоюзра ĕçлеме тытăнчĕ. Анчах ăна ку таранчен те учота илмен-ха. Мĕншĕн тесен, комсомолец Инцей райкомĕ учот карточкине йарса памаст. Вăл ĕçне пуçламăш организаци те интересленмест.

Михайлăв йулташ хăй çинчен çапла калат: «Епĕ комсомол ретĕнче 1931 çултанпа тăратăп, епĕ комсомолран тухса ÿкмен, малашне те комсомолрах йултассăн килет. Анчах та мана хамăн учот карточкине туйма пулăшмаççĕ». Машна интереслемеççĕ». Комсомолăн пуçламăш организацийĕ Михайлăв ĕçĕпе интересленмен пулсан, Шупашкартан 15 километра ларакан Ишлейпа çыхăнма пулман-и вара? Вăхăт та, майсем те çителĕклĕ пулнă.

Комсомолăн Чăвашпромсоюза çумĕнчи пуçламăш организацийĕ начар ĕçлениишĕн комитет секретарĕ Иефимăн, тата комитет çес мар, хула комитечĕ те айăплă. Çак факт çитĕ хула комитечĕ пуçламăш организацисене çирĕплĕн çыхăнса ĕçлемени çинчен калат.

Чебоксарец.

Агитатăрсен курсĕ

ЙРАК. Мартăн 30-мĕшĕнче ПСК(б)П райкомĕ çумĕнче организациленĕ агитатăрсен 10 кунлăх курсĕнчен 64 çын вĕренсе тухрĕç. Апрелĕн 1-мĕшĕнче агитатăрсен иккĕмĕш курсĕ уçăлчĕ. Унта 25 çын вĕренет.

И. Сергейев.

Партине илесси çителĕксĕр пырат

КАНАШ. Партин районри организацийĕ çулталăк хушшинче 23 йулташа парти кандидатне, 12 йулташа кандидатран члена тата 14 йулташа сочувствующинче илнĕ.

Ĕç çакăн пек çителĕксĕр пыни, вăл пĕтĕмпех парти райкомĕпе пуçламăш организацисем партине илес тĕлĕшпе массăлă ĕç туса пыманнинчен килнĕ. Уйрăмах ку йенĕпе-райком инструкторĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Акă райком инструкторĕнче ĕçлекен Григорьев йулташ участокра 11 йалсоветри парторганизацисем кĕреççĕ. Çак йалсоветсенчи колхозсем сумĕнче 25 комсомол пуçламăш организацийĕ пур. Паллах, ку организацисенче партипе кĕме тивĕçлĕ комсомолецсем сахал мар. Анчах Григорьев йулташ вĕсен хушшинче ĕçлемест. Çавăнпа унăн участокĕнчи пуçламăш парторганизацисем 1937 çултанпа пĕр çынна та партипе илмен, кандидата та пĕр çынна çес илнĕ.

Партине илесси райĕçтăвком, суту-илĕ организацийĕ, Хатĕрлев кантурĕ, Депо çумĕнчи пуçламăш организацисенче уйрăмах йапăх пырат. Ку организацисенче 1938 çул пуçламăшĕнчен парти ретне пĕр çынна та илмен.

Парти райкомĕ пуçламăш организацисен чи-пултаруллă та шанчăклă çыннисене парти ретне илес тĕлĕшпе тимлесех ĕçлемелле. Партине кĕме йурăхлă çынсем сахал мар.

П.

Агитатăрсемпе ĕçлет

Хавал-Çырма йалĕнчи (Йелчĕк р-нĕ) коммунис И. Васильĕв йулташ выранти агитатăрсем хушшинче тăрăшса ĕçлет. Вăл нумайях та пулмаст колхозри комсомолецсемпе партипе тăман активистсенчен агитатăрсене хатĕрлеме курс организацилесе, вăл курсран 18 çынна вĕрентсе кăларчĕ. Вĕсем курсра РСФСР тата Чăваш АССР Конституцийĕсене, суйлав Положенийĕне вĕренчĕ, тĕнчери лару-тăру лекцийĕсемпе те паллашнă. Халĕ çав агитатăрсем йалсенче ĕçлеççĕ.

Васильĕв йулташ агитатăрсене лайăх пулăшса пырат. Ун патне йалан тĕрлĕрен ыйтусемпе пыраççĕ. Вăл вĕсене лайăх-ăнлантарат, вĕсемпе калаçат. Çавăншăн ăна пурте хисеплеççĕ.

А. Купташкин.

Суйлав Положенисене вĕренессине йĕркелемеле

ЕЛĔК. ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра Изванкă йалсоветĕнчи йалсенче массăлă ăнлантару ĕçне анлăн сарса йачĕç. Ку ĕçре йалти учителсем, комсомолецсем, колхозник-активсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Суйлав пулса иртнĕ хыççăн, йалсоветĕнче массăлă ăнлантару ĕçĕ чарăнса ларчĕ. Халĕ йалсенче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенийĕсене ăнлантарса парасси çителĕксĕр мар.

Тимĕрçкасси йалĕнче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене çыннисене ăнлантарса пама Рахмулин, Иванов учителсене хушнă. Анчах вĕсем ку вăхăта çитсе те йалта кружоксем организацилесе заняти туса ирттермен. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене ĕçыннисене ăнлантарса парас тĕлĕшпе вулав çурт пуçлăхĕ Иефимăв йулташ та нимĕн те тумаст. Вăл ку тарана çитиччен хăй йертсе пыракан кружокра пĕр занятий çес иртернĕ.

Елĕк йалсоветĕнче те ĕç çителĕксĕр. Йанкурас, Урмай, Иштек йалĕнче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене пачах та ăнлантарса паман.

ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлама хатĕрленнĕ чух, Елĕк йалсоветĕнчи ĕçыннисене суйлав саккунне ăнлантарса парас тĕлĕшпе Елĕкри вăтам шкулти учителсем активлăн ĕçлерĕç. Халĕ вĕсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене ĕçыннисене ăнлантарса парас тĕлĕшпе хăйсене çирĕплетсе панă йалсене нимĕн те тумаççĕ.

Ф. Филиппăв.

Хапăссенчен пример илмеле

ВАРНАР. Хапăс колхозĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренес тĕлĕшпе чылай пысăк ĕçсем туна. Кунта 6 кружок ĕçлет.

Вулав çурчĕн пуçлăхĕ Дубанăв йулташ кружок заняти ирттерĕсенче Ленин, Сталин йулташсен социализмла революци вăхăтĕнчи ĕçĕсем çинчен калакан картинсем кăтартассине йĕркелене. Унпа пĕрлех суйлавçăсем патефон çинче Сталин, Молотăв йулташсен ССР Союзĕн Конституци пройекчĕ çинчен калана сăмахсене итлеççĕ. Çапла ĕçлениипе пайанхи купа 234 суйлавçăна кружоксене йапăртарнă.

Занятине çÿреме пултараймаан суйлавçăсене агитатăрсем килĕсенче кайса вĕрентеççĕ. Ку ĕçе парторг Гуçĕв йулташ йĕркелене.

Суйлав саккунĕсене вĕренессине Хăмăш колхозĕнче те лайăх йĕркелене. Суйлавçăсем хушшинче 27 агитатăр ĕçлет. Йалта 4 кружок. Вĕсенче 205 суйлавçă вĕренеççĕ. Пайанхи куна кружоксем пурте тăватшар заняти туса ирттернĕ.

Агитатăрсенчен уйрăмах Муравйов йулташ хăйĕн хастарлăхне палăртат. Вăл занятисене йаланах тĕплĕн хатĕрлесе пырат.

Çав вăхăтрах Кăкшăм йалсоветĕнче йалсенче пурте çитсе те РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренессине суйлавçăсем хушшинче йĕркелемен.

Хапăссенчен пример илмеле.

Ст. Улангай.

Дисциплинăна тата вĕрену пахалăхне лайăхлатмала

КУСЛАВККА. ПСК(б)П Тĕпкомĕн массăлă заочна вĕрену институтĕн Чăваш республикинчи уйрăмĕ Куславкка районĕнче заочна вĕрентес ĕçе организациленĕ. Кунта 56 çын вĕренеççĕ. Анчах вĕренекенсем хушшинче вĕрену дисциплинине, вĕрену пахалăхĕ çителĕксĕр.

Вĕренекенсем хăш пĕри заочтсем паман, хут çинче çеç вĕренекенсем шутĕнче тăнă. Акă, Лашманăв (пристань) 8 темăран 5 темăна паман. Никанăва (Сала), Герасимăва (райĕçтăвкомăн суйлев пайĕн пуçлăхĕ) зачотсем паман.

Вĕсене заочниксен шутĕнчен кăларна. Зачотсене вăхăтра паманнисем, занятисене йĕркелĕ çÿременнисем тата пур-ха.

Кусемпе пĕрлех занятисене лайăх хатĕрленсе, пырса зачотсене вăхăтра, йĕркелĕ парса пыракансем те пур. Акă, Пузанăв, Добродушев, Данилăв йулташсем зачотсене лайăх парса пыраççĕ.

Анчах, лайăх вĕренсе пыракансем пур тесе лăпланса лармала мар. Вĕренури дисциплинăна тата вĕрену пахалăхне лайăхлатас ĕçре татакла улшăну кирлĕ.

Н. Петров.

Хут пĕлменлĕхе пĕтереççĕ

ШАХАСАН. Матшу йалсоветĕнче хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем пуç 60 çын пурчĕç. Вĕсене октябр уйăхĕнче вĕрентме пуçланă. Халĕ хут пĕлменнисен шутĕнчен 16 çын, сахал пĕлекенсен шутĕнчен 26 çын вĕренсе тухрĕç. Хут пĕлменнисен шутĕнчен вĕренсе тухнисене малалла вĕренме хут сахал пĕлекенсен шкулне кусарчĕ. Вĕсене йалти учителсем вĕрентеççĕ.

В. Веселов.

Программăна ытлашшипех пурнăçларĕ

Йетĕрнери çитĕннисен вăтам шкулĕ касхи çменăра ĕçлет. Вăл кăçалхи вĕренÿ çулĕн виççĕмĕш чĕрĕкне аван вĕçлерĕ. Шкул виççĕмĕш чĕрĕк программине ытлашшипех пурнăçларĕ. Уйрăмах, вĕренÿре V-мĕшпе VIII-мĕш класcене лайăх результатсем пачĕç. Халĕхи вăхăтра V-мĕш класра 8 çын вĕренет, вĕсенчен чылайĕш отлично та хорошо палăлăсемпе вĕренеççĕ. Акă, Потемкинă йулташ пур предметна та отлично, Зайцевна Кнăçкова йулташсем 3-шер предмета отлично, 4-шар предмета хорошо вĕренеççĕ.

Шкулта политкружок, хор тата ПВХО кружокĕсем ĕçлеççĕ. Çак кунсенче çес 20 çын ПВХО значокĕн нормине пачĕç. А. Иванов.

Стахановецсем ответлă ĕçсенче

Куславкка комбиначĕнчи йулташки вăхăтра ĕçре хăйсен пултарулăхне кăтартнă стахановецсенчен чылайĕшне йертсе пырас ĕçсене кусарнă. Механикăчи цехра слесăр пулса ĕçленĕ Макарăчĕв йулташ халĕ механикăчи цех начальникне пулса ĕçлет. Вăл йертсе пыракан цех комбинатра малти ретре пыракан цехсенчен пĕри пулса тăчĕ. Макарăчĕв йулташ халĕ парти ретне кĕме хатĕрленет. Лаюс йулташ 1937 çулччен çиловой станцинче бригадир пулса ĕçленĕ. Халĕ çиловой станцийĕн начальникне пулса ĕçлет.

Архипăв йулташ тинĕтекен цехра лаборант пулса ĕçленĕ. Вăл лаборант пулса ĕçленĕ вăхăтра, цехри тинĕт ĕçсене лайăх йĕркене çитнĕ. Халĕ ăна тинĕтекен цех начальникне пулса ĕçлеме кусарнă. Йавăс ваклакан цехра çменă мастарĕ пулса ĕçленĕ В. Новикăв йулташа комбинатри Рабкооп председательне суйланă.

Комбинатра стахановецсенчен ответлă вырансене ĕçлекенсем нумаях пур-ха. Ия. Константинăв.

Оборонă ĕçне—çулĕ вырăна

ШАХАСАН. Парти райкомĕ профсоюзсен выранти комитечĕсен тата Осоавиахим пуçламăш организацисен председательсен районри канашлуне туса ирттерчĕ.

Канашлу Осоавиахим организацисен ĕçне тĕпрен вайлатма кирлине палăртрĕ.

Осоавиахим райсовечĕ пуçламăш организацисемпе çителĕклĕ ĕçлесе пыман. Оборонă значокĕсен нормисене парассине кирлĕ пек хакламан. Ворошилов пек тĕл пеме вĕренес ĕçре пысăк чăрмавсем пур. Ку тарана çитсе те районра йатарласа туна тир çук.

Райсовет председательне Хĕрлĕ Çартан таврăннă кĕçĕн командир Федăрăн йулташ ĕçлет. Вăл хастарлă комсомолец. Анчах ăна кулленех ĕçре пулăшни кирлĕ. Ку тĕлĕшпе райкома райĕçтăвком тата райкомол нимĕнех те тумаççĕ.

Канашлу Осоавиахим Чăваш Совечĕ выранĕсене туса кăтартусем памаш тапĕтенчĕ тĕ хытăн тишкерчĕ. Ваç. Чернов.

Тракри (Трак р-нĕ) вăтам шкулта ПВХО, ГСО кружокĕсем ĕçлеççĕ. ПВХО кружокĕнче 70 ача, ГСО кружокĕнче 60 ача вĕренеççĕ. Занятисем ик кружокĕнче те йĕркелĕ пулса иртеççĕ. Халĕ ПВХО кружокĕнче вĕренекенсем нормăсем парма значоксем илеççĕ. Г. Архипăв.

Иккĕмĕш кварталта лайăхрах ĕçлемеле

Виççĕмĕш пилĕкçуллăхăн пĕррĕмĕш çулне кĕнерепне виçĕ уйăх—пĕр квартал иртрĕ. Чăваш Тĕпçтăвкомĕ çумĕнчи Деткомиссин предприйатийĕсем 1-мĕш квартал планне 128,7 процент тултарчĕç. Продукци туса кăларни 1937 çулхи 1-мĕш кварталпа танлаштарсан 70 процент ÿснĕ. Плана уйрăм таварсем туса кăларас йенĕпе анлăлăн пурнăçа кĕртнĕ. Акă, сăмахран, çăматăсем тăвассипе 147,4 процент, пичке-каткасем тăвассипе 129,7 процент, йавăç материалĕсем сурассипе 122 процент тултарнă.

Уйрăм предприйатисене илсе пăхсан Шупашкарти хапрăк пысăк тухăçлăхпа ĕçленине куратпăр. Вăл квартăл планне 155,5 процент тултарнă. Сĕнтĕрвăрринчи пичке-катка савачĕ те нумай кайа йулман, квартăл планне 143,5 процент тултарнă. Мыслецри хăма савачĕ 106,6 процент панă. Çĕмĕрлери савăт çес кăçалхи план тăрăх ĕçне пурнăçламан.

Çак ÿсĕмсен никĕсĕ ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче ĕçлекенĕ социализмла ăмăртупа стахановла йухăм, производствăлă активăх пулса тăрат. Суйлав кампани вăхăтĕнче Сталинла Конституци тивĕçĕпе хавхаланса çĕршер рабочисем производствăри техникине алла илсе стахановецсен ретне тăчĕç. Халĕ Деткомиссин предприйатийĕсенче ĕçлекен 250 çынран 113 çын стахановецсемпе ударниксем пулса тăраççĕ. Вĕсем пысăк тухăçлăхшăн кĕрешеççĕ, ĕçре ÿсĕмсем тăваççĕ. Акă, Шупашкарти хапрăкри пичке-каткасем тăвакан Быстров йулташ квартăл планне 176,6 процент тултарнă, Çавнашкалах станочник Кусмин—177,8 процент, тата Спиринпа Смирнов йулташсем кулленхи нормăна 150—160 процентпе, Сĕнтĕрвăрринчи катка-пичке тăвакан Копылов йулташ квартăл планне 230 процент тултарнă.

Çаксем вĕсем—кивĕ ĕç йĕркине ÿтентерекенсем, производствăна çĕнĕ культурă кĕртекенсем, хăйсен опычĕпе çĕршер рабочисене лайăх ĕçлессипе кĕрешме хăвăтаракансем.

Стахановла тухăçлăхпа ĕçлени рабочисен пурнăçĕпе культурине хăвăртăн çĕклеме майсем туса парат. Хăй чĕречĕпе рабочисен пурнăçĕпе культурăлăхне çĕклесси пыни тухăçлă ĕçлеме условисем парат, хавхалантарат. Пĕтĕм ĕçсен йăлăлăхĕ çак икĕ ыйтăва тачăн çыхăнтарса пурнăçа кĕртсе пынипе пулат. Ку сăмахсен чăнлăхĕ Деткомиссин пĕррĕмĕш кварталти ĕçĕнче те уççăнах курăнса тăрат.

Сĕнтĕрвăрринчи савăтри работи Зимин йулташ пĕррĕмĕш квартăлта 2 пин тенкĕ ĕçлесе илнĕ, çав савăтра ĕçлекен Романăв йулташ 2300 тенкĕ илнĕ. Çавăнпа малашне лайăхрах ĕçлеме условисем туянă. Шупашкарти хапрăкра 1936 çулта кĕнĕ. Вăл ун чухне хут пĕлмен çын пулнă. Тăрăшса, çине тăрса ĕçлениипе стахановецсен ретне тăнă. Стахановла ĕçлесе вĕренме условисем турĕ. Халĕ вăл производствăран татăлмасăр 5-мĕш класра вĕренет. Никифăрăв, Усăв, Вишневский, Тарасăв, Кувшинăва, Трофимăв тата ытти йулташсем те хăйсен пĕлĕвне пысăк тимлĕхпе ÿстерсе пыраççĕ.

Рабочисем хăйсен политикăлă пĕлĕвне ÿстерессишĕн тăрăшаççĕ, вĕсем техникăна вĕренесшĕн, тĕнчери лару-тăрупа интересленеççĕ. Çак ыйтусене пурнăçа кĕртсе пырассине организацилени — производствăпа планне тултарма кирлĕ условисенчен пĕри пулат. Пирĕн предприйатисенче çак ĕçе кăçал тĕрлĕрен ыйтусемпе 24 пуху, активпа 13 канашлу иртрĕ. Халĕхи вăхăтра РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсене тата Верховнăй Совета суйламали Положенипе вĕренмели кружок ĕçлет. Шупашкарти хапрăкра ĕçлекенсенчен кăçал 3 çын производствăран татăлмасăр вĕренсе йотчиксем пулчĕç. Халĕ тата 3 çамрăк вĕренеççĕ. Лайăх, вĕрентнипе Пакалĕв йулташа 300 тенкĕ премипе панă. Оборона ĕçĕ те вайлансах пырат.

Иертсе пырас ĕçре нумайĕшĕшне малтан пулнă стахановецсене йĕрлесе ĕçлеççĕ. Мыслецри хăма савăчĕн директорĕ пулса Çĕмĕрле комбиначĕнчи столярнăй цехра мастăр пулнă Вахнин йулташа лартнă. Шупашкарти çменă мастарĕ пулнă Старухин йулташ Çĕмĕрлери савăт директорĕ пулса ĕçлет. Шупашкарти хапрăкра станочник пулнă комсомолец Константинăв йулташ хапрăк директорĕ пулса ĕçлеме кусарнă т. ыт. те. Иертсе пырас ĕçе 10 çынна кусарнă. Вĕсем пурте хăйсен ĕçĕсене анлăлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Деткомиссин пĕрлештерсе тăракан хапрăк-савăтсен ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур. Шупашкарти хапрăкра сĕтел-пукансем туса кăларас плана 60,4 процент çес тултарнă. Тĕрлĕрен йешчĕксем тумали материалсем йенĕпе Мыслецри савăт йулса пырат. Сĕнтĕрвăрринчи квартăлта 690 фесметр каларма ыранне 550 фесметр çес кăларнă.

Предприйатисенче работисем йышăннă решенисене пурнăçа кĕртмелле тăвассипе те тимлĕн кĕрешни çук-ха. Çĕмĕрлери, Мыслецри, Сĕнтĕрвăрринчи савăт директорĕсем техника вĕренĕвне лайăхлатассишĕн тăрăшмаççĕ. Культурăлă массăлă, производствăлă пропаганда ĕçĕсем те йапăх пырат. Хут пĕлменнисене вĕрентесси те йапăх пырат.

Чĕрĕ таварсем хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемени чылай çитменлĕхсем кÿрет. Çĕмĕрлери, Мыслецри савăтсене чĕрĕ тăварсем пĕр-ик уйăха кăна çитеççĕ. Райĕçтăвкомсем Деткомиссин предприйатийĕн ĕçĕсемпе тивĕçлипе интересленмеççĕ. Вĕсем йертсе пырас ĕçре нумай пулмаст кусарнă работниксене пулăшмаççĕ. Канаш, Шупашкар, Çĕрпÿ тата Тутаркас районĕсенчи вăрман хуçалăхĕсем предприйатисене чĕрĕ таварсем парас йенĕпе Государства План Комиссийĕ панă нарйада та пурнăçа кĕртмеççĕ. Çавна пула предприйатисем 600 пин кубометр чĕрĕ таваралла хăрушлăхра тăрат. Росснабсбытăн Чăваш кантурĕ техникă материалсене парас йенĕпе сахал пулăшат.

Иккĕмĕш кварталта Деткомиссин производствăла пĕрлешĕвĕ хăйĕн умне çак çитменлĕхсене пĕтерсе тата та лайăхрах ĕçлес задача лартат. Анчах çавна тума райĕçтăвкомсем, Деткомиссин предприйатийĕ, Государства План Комиссийĕ пулăшу пама кирлĕ. Вара тата та лайăхрах ĕçлеме пултаратпăр.

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕ çумĕнчи Деткомиссин производствăла пĕрлешĕвĕн управляющийĕ—ЗИМИН.

1938 çулхи çураки

Колхозсен уй-хирĕсенче

ЙЕЛЧĔК. (Телефон тăрăх). Колхозсен уй-хирĕсем йуртан тасалса çитеççĕ, ирĕн-каçăн анчах кăшăнтса тăрат. Нумай колхозсенче клевĕр акаççĕ. Апрелĕн 10-мĕшĕнче районри 10 колхозра 226 гектар клевĕр акнă.

Чылай колхозсенче тĕштырăсене акма тухма та хатĕр тăраççĕ. „Красная Чувашия" колхозри бригадирсем хаљ çĕр пиççе çитесçе сăнаса тăраççĕ.

Ф. Майков.

ЙЕТĔРНЕ. (Телефон тăрăх). Апрелĕн 10-мĕшĕнче районĕпе 183 гектар клевĕр акнă. Полљанкăри Кирăв йачĕпе тăракан колхозра 71 гектар, Хурамалăхри Калинин йачĕпе тăракан колхозра 35 гектар, „Ленин çулĕпе" колхозра 40 гектар, Йетĕрнери „Партин 17-мĕш сйесĕ" колхозра 10 гектар клевĕр акрĕç.

Н. Цветков.

„Прогресс" колхоз çуракине хатĕрленсе çитрĕ

ЙЕТĔРНЕ. Участкăри агроном Аникин йулташ пуçарнипе комсомолĕцсем Мăн Чурашри „Прогресс" колхоз çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслерĕç. Колхоз çуракине тухма лайăх хатĕрленсе пыни курăнчĕ. Вăрлăхсене пĕтĕмпех тĕплĕн суртласа хатĕрленĕ, кăçал пĕтĕмпех суртлă вăрлăх акаççĕ Нумайăх та пулмасĭ. Вăрнарти „Заготзерно" складĕнчен „Лютесценс А-62" сурт тулă 110 центнĕр улăштарса килнĕ. Йĕтĕн вăррипе кантăр вăрри колхозăн хăйĕнчен ытлашши те пур, ытлашшине çывăхри колхозсене сутаççĕ.

Плугсене, сӳресене, çейăлкăсене феврал̦ уйăхĕнчех йусаса хунă. Сӳре туртисем, пăйавсем, урхалăхçем çителĕклĕ.

Кăçал çĕре çемçетмелисем иртнĕ çулхинчен икĕ хут ытларах кăларнă.

Çапла ĕçлессĕ гектартан 120 пăтран кайа мар тĕштырă туса илме пулнă „Прогресс" колхозра. Ăмăрту сарăлсах пырат, бригадăсем пĕр-пĕрнипе тунă договăрсене пурнăçласах пыраççĕ.

Тĕреслӳ çитменлĕхсене те палăртрĕ. Колхозра агрокружок ĕçлемест. Колхоз правленийĕ кружоксене йертсе пыма руководителсем тупман. Бригадăсенче стахановла звеносем тума, агротехникăна вĕренес ĕçе тытăнма сĕнсе хăварчĕç.

Й. Çеменăв.

Ăмăрту мĕнле пынине тĕрĕслерĕç

Уйкас-Йуштапа йалсоветĕнчи (Трак р.) Каганович йачĕпе тăракан колхозпа Хура Пырти „КИМ" колхоз кăçал гектартан 150 пăтран кайа мар тĕштырă туса илессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Çураки çывхарнă май, вĕсем пĕр-пĕрин ĕçĕсене тĕрĕслесе пăхрĕç. Каганович йачĕпе тăракан колхоз аван ĕçлени палăрчĕ. Вăл çуракине лайăх хатĕрленнĕ.

„КИМ" колхоз çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитмен. Пăрçа, кантăр вăрри вăрлăхĕсене суртласа пĕтермен. Ăмпара хывнă „Винер" сурт урпа вăрлăхне суртлă мар вăрлăхпа пĕрле хывса хутăштарса йанă. Йалхуçалăх машинĕсене лайăх тирпейлесе хуман. 1-мĕш бригадăн плугсем тислĕк айĕнчех лараççĕ. Иккĕмĕш бригадăн пĕр сӳре те çук.

Каганович йачĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсемпе ăмăртакан „КИМ" колхоза çуракине лайăх хатĕрленсе тухма пулăшаççĕ.

Т. Скворцов.

Çураки умĕнхи вĕренӳре

★ Маншури „Çамрăк колхозник" колхозра (Шăхасан р.) агрокружок ĕçлет. Ку вăхăта çитсе 12 заљати туса иртернĕ. Кружокра 28 колхозник вĕренеççĕ.

В. Веçелов.

★ Есмĕлте (Сĕнтĕрвăрри р.) вăрлăха вутпуççипчен тасатас тĕлĕшпе ĕçлекенсем валљи 3 кунлă курс пулса иртрĕ. Есмĕл участкинчи агроном Петров йулташ вăрлăха вутпуççинчен тасатас тĕлĕшпе чухемели йĕркесем çинчен вĕрентрĕ. Курса 18 колхозран 21 колхозник килсе вĕренсе кайрĕç.

Ив. Йефремăв.

★ Çак кунсенче Ишлей районĕнчи колхоз председателĕсемпе бригадирсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура райçĕрĕç пайĕн аслă агрономĕ Федăрăв йулташ вăрлăхсене тĕрлĕ майсемпе чӳхесе акасси çинчен тата йаровизаци çинчен ăнлантарса пачĕ.

Ф. Быкăв.

„Çавалстрой" колхоз прорывра

„Çавалстрой" колхозра (Çĕрпӳ районĕ) йаланах çирĕп йĕрке пулнă, пур ĕç те организацилĕн пулса пынă. Çакна пула иртнĕ çулсенче лайăх ĕçленĕ. Анчах та кăçал ĕçсем пачах урăхла. Колхоз çуракине пит те йапăх хатĕрленнĕ. Ку тарана çитсе те вăрлăхсен пахалăхне тĕрĕслемен. Пăрçа вăрлăхне 42 центнĕр суртласа хуман.

Йалхуçалăх машинисене ку тарана çитсе те йусаса çитермен. Кӳлмели таврашсем çителĕклĕ мар.

Ĕç вăйне йĕркелемен. Производствăлă план туман.

Х. А.

Ӳкерчĕк çинче: Пĕрремĕш пилĕкçуллăхра, 1932 çулта, ĕçе кĕнĕ „Запорожсталь" (Серго Орджоникидзе йачĕпе тăракан) саватăн хурçă шăратакан станĕ.

Ф. Фислов фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Райçутĕç пайĕ вулав çурчĕсемпе ĕçлемест

Колхозниксемпе йединоличниксем тĕрлĕрен ыйтусемпе интересленеççĕ. Вулав çурчĕсен вĕсене çав ыйтусем çинчен ăнлантарса памала.

Çак ответлă та чыслă задачăна Йетĕрне районĕнчи Полљанкăри вулав çурчĕн пуçлăхĕ Пакушов йулташ ăнланса илнĕ. Вăл тимлĕн ĕçлесе пырат. Унăн вулав çурчĕ çумĕнче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлamaли Положенисене вĕренме 10 кружок организациленĕ. Кружоксенче пурĕ 350 çын вĕренеççĕ. Кашни кружокрах виççĕшер заљати иртернĕ. Вулав çурчĕ çумĕнчех литкружок ĕçлет. Ку кружокра 45 çын тăрат. Вулав çурчĕн библиотекинче 980 кĕнеке шутланат. Библиотекăран кĕнекесем илсе вулакансен йышĕ пысăк. Вулав çурчĕ çумĕнчех агрокружок ĕçлет. Заљати виçĕ кунта пĕрре пулса пырат.

Çавăн пекех Шăмат, Тури Мучар йалсовечĕсенчи вулав çурчĕсем те аван ĕçлеççĕ.

Анчах, районра начар ĕçлекен вулав çурчĕсем те чылай-ха. Вулав çурчĕсен пуçлăхĕсем, библиотекăри кĕнекесене парса илнисĕр пуçне, нимĕнле ĕç те тумаççĕ. Йалсовечĕсем вулав çурчĕсене ĕçре пулăшни, вĕсен ĕçне вăхăтра тĕрĕслесе тăни çук. Акă, Палтайри вулав çурчĕн пуçлăхĕ Павлăв йулташ тăватă уйăхшăн ĕçукçи илеймен. Йалсовечĕ вулав çуртне хаçат-журналсем çырăнма, краççин, çĕнĕ кĕнекесем илме укçа-тенкĕ памасăр тăнă. Иваљкăври вулав çурчĕ пĕчĕк пӳртре. Вулав çуртне йалсовечĕ пулăшмасĭ. Библиотекăра мĕн пурĕ 60 кĕнеке çеç. Апла пулин те йалсовечĕ вулав çурчĕ валљи сметăпа пăхнă укçатенкĕпе усă курма памасăр тăрат.

Никољскинчи вулав çурчĕ лайăх ĕçлеме услови пур çинчех ĕçлемесĭ. Кунта РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлamaли Положенисене вĕренме халĕ те тытăнман.

Чылай çĕрте вулав çурчĕсен пуçлăхĕсем час-часах улшăнса тăраççĕ. Çулталăк хушшинче Каташри вулав çурчĕн пуçлăхĕ тăватă хут, Ирçере виçĕ хут улшăннă. Каташри вулав çурчĕ хурал пӳртенче. Унтах хуралçăсем çывăраççĕ. Çавăнпа кунта йĕрке çук. Кружоксем ĕçлемеççĕ.

Районри çутĕç пайĕ вулав çурчĕсемпе ĕçлемест, вĕсене ĕçре пулăшу памасĭ. Кăçал вулав çурчĕсен пуçлăхĕсене пухса пĕр канашлу та иртермен. Хĕллехипе çуркуннехи ĕçсен планне те çуркунне çитсен тин алла панă.

Вулав çурчĕсене йертсе пырас ĕçре райçутĕç пайĕн татăклă улшăну тумала.

Ник. Цветков.

Малта пыракан çменăсем

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинатра авса пукансем тăвакан цехри Голикăвна Ковалљовă йулташсем йертсе пыракан çменăсем йулашки вăхăтра тухăçлă ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсем иккĕшĕ те кулленхи нормăна 110—112 процент таран тултарса пыраççĕ.

Çменăсем лайăх ĕçлеме пуçлани пĕтĕмпех çменă маçтăрĕсем ĕçе лайăх организацилеме пĕлнипчен килет. Кунта кашни ĕçлекенех уйрăм ĕç уйăрса панă, станочниксем çумне детальсем илсе пыма уйрăм подручнăйсем тăратнă. Социализмла ăмăрту ĕçне те лайăх йĕркеленĕ.

Стахановĕцсем май уйавне çĕнĕ çитĕнӳсем тупине кĕтсе илес тесе обйазательствăсем илеççĕ. Çменăри стахановкăсем: Маркăвă, Никифăрăвă, Анисăмăвă, Певграфăвă, Чернова йулташсем (вĕсем пурте виççĕмĕш отделенинче ĕçлеççĕ) кулленхи ĕç нормине 140—150 проценшер тултарса пыраççĕ.

Голикăвна Ковалљовă йулташсем иккĕшĕ те комбинатра чылай çул хушши ĕçлеççĕ, иккĕшĕ те коммунистсем. Халĕ вĕсем май уйăхне ĕçре татах пысăк çитĕнӳсем туса кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

А. Чапрайĕвă.

Йалан сыхă пулатпăр

(Красноармейĕц çырăвĕ)

Совет çĕршывĕ çине фашисăмла государствăсем пур йенчен те вăрçăпа тапăнма хатĕрленни пире уççăнах курăнса тăрат. Нумайах пулмасĭ Германи фашисăмĕ хăйне йунашар Австри çĕршывне йарса илчĕ. Унпа пĕрлех Австрин фашисăма хирĕç тăма пултаракан çыннисене пинĕ-пинĕпе хупса лартрĕ.

Çавăн пекех, тепĕр йенчен Йапони, Китай çĕршывне çавăрса илсе, пирĕн çине вăрçăпа тухма ĕмĕтленет. Çапла вара Германипе Йапони тата ытти фашисла государствăсем Совет халăхĕн телейлĕ пурнăçне пĕтерсе ССР Союзĕнче капиталисăмла йĕрке туса хураççăн. Ку емĕт вĕсен нихăçан та пурнăçа кĕреймĕ.

Епĕр №-ски чаçри красноармейĕцсем, фашисăм пирĕн çине шăлне хăйранине ăнланса илсе, хамăрăн сисĕмлехе хастарлăха татах ӳстерни лататпăр. Хамăрăн Сталинла Конституци йалавĕ айĕнче чечекленсе ӳсекен тулăх та пуйан çĕршыва тăшмансем тапăнасран нихăçанхинчен хытă сыхлатпăр. Унпа пĕрлех хамăр хушăри социалисăмла ăмăртăва сарса, майăн 1-мĕшне политикăна вăрçă ĕçне отличнă вĕренийне кĕтсе илмĕ пулатпăр.

Красноармейĕц Ф. Г. Сазанăв.

Кул̦турлăх кирлĕ

Акă, есĕ ĕç пĕтнĕ хыççăн, йе канмали кун парикмахĕркипе кĕрсе çӳç кастарасшăн, сухал хыртарасшăн. Карл Маркс урамĕнчи парикмахĕрскине кĕрсе черет йышăнатăн. Сан пек шутпа пынисем темĕн чухлех. Есĕ те пĕр кĕпĕ чух ĕçе тусах кайасшăн. Пĕр пукан çинче икшерĕн ларакансем те пур, вĕсем, нумай вăхăт хушши кĕтекенскерсем, кивĕ хаçатсене пăхкалаççĕ, çавах та вĕсем „лайăх" вырнаçнă, вĕсем пал̦тосене хывса вешăлкă çине çакнă, есĕ тата сан хыçран кĕнĕ йултăшсем ура çинчех тăраççĕ. Ункелешместĕн, мĕншĕн тесен—„хăнăхнă", пал̦тона хывмастăн, мĕншĕн тесен çакмали вырăн çук. Черете ура çинче тăрсах иртерме шутлатăн. Акă, сан черет çитет, пал̦тона хывса тем пек кармăшса çакаласа йаран (вăл пал̦то есĕ „тасаличчен" чылай иуша курăт, ĕç пĕтернисем хăйсен пал̦тоне шыранă чух ик-виç хут çĕре ӳкет, пал̦то мĕнле çакăнса тăнине тĕкĕр çинчен курса тăма тăрăшатăн, çухаласран хăратăн), кепкуна çакма йе хума вырăн çук ширки пиншак кăсйине чикетĕн те пукан çине ларас тесе васкаса пыран. Анчах лараймастăн, есĕ çитиччен пырса та лараççĕ. Черете йĕркелĕ тытаймастăн. Çавах та „сĕмсĕрленсе" пĕр сехете йахăн кĕтнĕ хыççăн „тасалма" ларатăн. Мĕн тумалине санран ыйтнă хыççăн, сан çине тасамар, çӳçленсе пĕтнĕ çивитти çакăт, ăна тăвачченех хыçалта сана тата черет кĕтекен йултăшсене тивмеле силлесе илет. Есĕ чăтаймасăр:—Сирĕн ку хатĕрсем мĕншĕн таса мар,—тесе ыйтатăн. Парикмахĕр йулташ тĕрĕс панă ыйтăва ăнланса илет.

— Темчул та калатпăр комплектсене нумайлатас тата час-часах çăвас тесе, анчах епĕр тата есĕр ыйтнине ертел пурнăçламасĭ, тет вăл.

Супăњ кăпăкĕ сĕрме пуçлат. Ните ныр̦ă перĕнсенех нетĕм ӳт çӳçенсе кайат, есĕ пĕрре пăвакарса кайатăн, тепре хĕрелен, шыв сиберĕ.

— Туртмасĭ-и?—тесе ыйтат санран. Шăла çыртса,—ничево, тесе ответлетĕн.

Акă, часах санăн çук „шĕпĕне" тикĕслесе илет. Каснине курман пек пулса ларан, вăл та сана кăтартасшăн мар, пысăк пуçпӳрнине супăњ кăпăкне сăтăрса пырса пусат. Унтан одеколон сапас тесе чăрлаттарма пуçлат... тӳрех куçа лекет. Есĕ чăтатăн.

Асар-писерсем пулсă иртнĕ хыççăн „спасибă" тесе талон илсе укçа тӳлен те, пал̦то тăхăнма шутлатăн. Пăхан, сан пал̦то çук. Хăрасах кайатăн. Хăрама кирлĕ мар, никам та тăхăнса кайман. Есĕ „тасалнă" вăхăтра çĕре ӳкнĕ çеç... Хал̦ вăл клиентсем ларакан пукан хыçĕнче. „Кăçарăр" тесе илсе тăхăнатăн та, часрах тухса кайатăн вара парикмахĕрскинчен. Есĕ парикмахĕрскинче таçалăхпа кул̦турлăх çукки, клиентсемпе парикмахĕрсем валљи лайăх условисем çукки çинчен шухăшлатăн.

* * *

Шупашкар хули çултан çул ӳссе, кул̦турланса пырат. Кăçалхи çул нихăçанхинчен ытла ӳсет. Ку Шупашкар хула совечĕн коммуналлă хуçалăх пайĕнче тата промсойузра ĕçлекенсемшĕн те паллă. Анчах темшĕн Шупашкарти парикмахĕрскисенче кул̦турлăх çук. Хула ӳссе пынă май парикмахĕрскисем çитмеççĕ. Аçта пынă унта пысăк черет. Хула совечĕн тимлесех ку ĕçе йĕркелемеле. Парикмахĕрсем хушшинче политикăла-кул̦турăла ĕçе организацилемеле, вĕсене вĕрентсе куллен пулăшса пымала.

А. С.

Агротехникăлă консул̦таци

КОЛХОЗРИ ЙАРОВИЗАТĂРĂН МĔН ПĔЛМЕЛЕ

Йаровизацилес ĕçре кирлĕ çуртсемпе ĕçхатĕрĕсем

Çурхи тĕштырăсене йаровизацилес ĕçе пĕр-пĕр витнĕ вырăнта, çăмăр кĕмен вырăнта туса иртерме çăмăлрах пулат. Витнĕ вырăнта, сăмахран витнĕ итем çинче вăрлăха куштарма та лайăхрах,—вăрлăха куштарни йаровизацилес ĕçре чи кирли пулса тăрат. Витнĕ итемсĕр пуçне йалхуçалăх машинĕсем усрамали сарайра та тата тырă усрамали пысăк ампарсенче те йаровизацилеме пулат. Йаровизациленĕ чух çуртра вентил̦яци лайăх пулмалине, çурта çил кĕрсе витĕр тухма кирлине йаланах асăрхамала.

Йаровизацилемели кашни центнĕр вăрлăх валљи 2 тăваткăл метр лаптăк кирлĕ.

Вăрлăх йаровизацилеме тытăниччен 2 ерне малтан йаровизацилемели çурта тасатса хатĕрлемеле. Урай тăпраран та, тăмран та пулма пултарат. Хăма урай пулсан, шăтăк-çурăксене пурне те питĕрмеле. Тăпра урай çемçе йе кăпăшка пулсан, ăна йаровизаци ĕçне тытăниччен 5 кун малтан шыв сапса йĕпетсе, кăштырăш улăмĕн туранчăкне салатса пăрахса хытармала, (çурхи тырă улăмĕн туранчăкĕ йурамасĭ). Çавăн хыççăн вара шăлса тасатса, извĕç ирĕлчĕкĕпе сĕрсе тухмала.

Йаровизацилеме тытăниччен малтан çакăн пек ĕçхатĕрĕсене хатĕрлесе хумала: 1) термометрсем, 2) шыв катки, 3) алалă лейкĕ, 4) тимĕр витресем, 5) йăвăç кĕреплесем, 6) йăвăç кĕреçесем, 7) тараса, 8) тырă сăвăрмали, 9) брезент йе шăналăк.

Ĕçе тытăниччен малтан термометрсене пурне те тĕрĕслесе пăхмала. Ирĕлекен йур çине лартнă термометр 0 градус кăтартат пулсан, вăл вара тĕрĕс ĕçлет.

Вăрлăх

Йаровизацилеме уйăрса илнĕ вăрлăх ăшĕнче пĕр пĕрчĕ те çумкурăк вăрри, çавăн пекех тата çӳп-çапсемпе вăрлăх ванчăкĕсем те пулмалла мар. Ванчăк вăрлăхсем час пăсăлнипе йаровизациленĕ чух лайăх вăрлăхсем те пăсăлма пултараççĕ.

Йаровизацилеме илнĕ вăрлăх аван шăтаканни пулмала (вăрлăх лабораторийĕнче тĕрĕсленĕскер пулмала). Çавăн пекех тата хытă вутпуççи хутăççисенчен те тап-таса пулма кирлĕ. Хытă вутпуççи хутăççисене емел пĕтереймест.

Вăрлăха йĕпетмели тата чӳхемели йĕркесем

Йаровизацилемели çурхи тулă вăрлăхне малтан обйазательнă йĕркепе АБ текен препаратпа йĕпе вутпуççирен тасатас тĕлĕшпе типĕ халĕн чӳкеме кирлĕ. Пĕр центнĕр вăрлăх чӳкеме 200 грам препарат (порошок) кирлĕ пулат. Йаровизацилемели вăрлăха урăх тĕрлĕ препаратпа чӳкеме йурамасĭ.

Сĕлĕ тата урпа вăрлăхне формалинпа чӳкемеле. Çавăн пекех тулă вăрлăхне те формалинпа чӳкеме йурат.

Йаровизациленĕ чух вăрлăха урайне сармала. Виçĕ тоннăран ытла пĕр купана хывма йурамасĭ.

Вăрлăх нӳрлĕхĕ 13 процент пулсан, кашни центнĕр çине çакăн чухлĕ шыв сапма кирлĕ:

а) кĕленче тĕслĕ çурхи тулă вăрлăхĕ (час пулма ĕлкĕреймен сурт пулсан) çине 33 литр;

б) çемçе суртлă тата час пулса çитекен суртлă тулă вăрлăхĕ çине 31 литр;

в) сĕлĕ тата урпа вăрлăхĕ çине —35 литр.

Вăрлăх нӳрлĕхĕ 13 процентран кайарах пулсан, кайарах шутланакан кашни процент пуçне пĕрер литр шыв хушса сапмала. Вăрлăх нӳрлĕхĕ 13 процентран ытларах пулсан, вара вунвиççĕрен ытларах тухакан кашни процент пуçне пĕрер литр шыв сахалрах илмеле.

Кăтартса панă шыв нормине пĕр харăс сапсан, вăрлăх пĕр пек тикĕс нӳрелсе йулаймасĭ, сапнă шывăн чылай пайĕ йухса тухăт. Çавăнпа пĕр талăк хушшинче виç хутчен йĕпетсе нӳретмеле.

Вăрлăха йĕпетнĕ чух çапла ĕçлемеле. Вăрлăх хисепне тĕрĕс пĕлсе шыв мĕн чухлĕ кирлине шутласа кăлармала. Тулли нормăпа шыв мĕн чухлĕ кирлине пĕлнĕ хыççăн, унăн виç пайĕнчен пĕр пайне виççе илмеле те, пичкене йамала. Ĕçлекенсенчен пĕри пичке ăшĕнчен алалă лейкăпа шыв илсе вăрлăх купи хĕррипчен сирпĕтсе тăрат. Тепĕри — йĕпетнĕ вăрлăха йăвăç кĕреçепе уйăрса, тепĕр йеннеле сирет. Çапла майпа пĕтĕм вăрлăх купине йĕпетсе çитермеле.

Çавăн хыççăн нӳретнĕ вăрлăха 25—30 сантиметр хулăмĕш туса выртармала. 2—3 сехет иртсен каллех вăрлăхсене кĕреçепе пăтратса тухмала.

Малтанхи хут нӳретес ĕçе кăнтăрла иртсен туса иртерсен аванрах. Вара иккĕмĕш хут нӳретессине тепĕр кунне ирхине иртерех тума пулат.

Тепĕр кунне ирхине иккĕмĕш хут нӳретме тытăниччен малтанăх нормă тăрăх кирлĕ шывран тепĕр виççĕмĕш пайне пичкене йарса хатĕрлемеле. Йаровизацилемели тулă вăрлăхĕ АБ текен препаратпа емелленскер пулсан, йе сĕлĕпе урпа вăрлăхĕ пулсан, пичкери кашни 10 литр шыв çине 35-шер грам формалин йамала. Формалин 40 процентлă кирлĕ, вăл таса, ним пăтранчăксăр пулмала. Формалин йанă хыççăн, пичкери шыва тĕплĕн пăтратмала.

Тулă вăрлăхне нӳретме тытăниччен АБ препаратпа тусанлатса емелленĕ пулсан, иккĕмĕш хут нӳретнĕ чухне формалин йама кирлĕ мар.

Иккĕмĕш хут нӳретес ĕç те пĕрремĕш хут нӳретнĕ чухнехи пекех пулса иртмеле. Анчах, иккĕмĕш хут нӳретнĕ чух шыв çине формалин йанă пулсан, нӳретнĕ хыççăн вăрлăх купине икĕ сехет хушши брезентпа йе шăналăкпа витсе выртармала. Икĕ сехет иртсен витнине илмеле те, вăрлăха тĕплĕн пăтратмала. Вăрлăх купи ăшĕнчи температурă Цел̦си градусникĕпе 5 градусран ытла мар пулсан, ăна вара 2 сехет хушши мар, 3 сехет хушши витсе выртармала. Формалин ирĕлтерсе нӳрлетнĕ вăрлăх çине малтанхи вăхăтра хĕвел пайăркй ӳкесрен тата вăрлăх ăшĕнчи температурă 10—12 градусран çӳлерех пуласран асăрхаcах тăмала.

Иккĕмĕш хут нӳретнĕ хыççăн 6 сехет таран вăхăт иртсен, виççĕмĕш хут нӳретме тытăнмала. Виççĕмĕш хут нӳретнĕ чухне йулашки шыва çурмала пайласа, пĕр пайне 6 сехетрен, тепĕр пайне кăшт тăхтарахпа сапса нӳретсен аванрах пулат. Нӳретнĕ хыççăн, вăрлăх купине каллех кĕреçепе тĕплĕн пăтратмала.

Йаровизациленĕ чухне шыв нормине кунта кăтартнинчен сахалрах та, ытларах та илме йурамасĭ. Çавна кашни йаровизатăрăн тĕплĕн пĕлсе тăмала. Çавăнпа пĕрлех тата вăрлăх купи çине витмелисене, кĕреçесене тата ытти ĕçхатĕрĕсене те пĕр процентлă формалин ирĕлчĕкĕ ăшĕнче тытса дезинфекцилеме кирлĕ.

Йулашки хут нӳретнĕ хыççăн вăрлăх купи çине термометр лартса температурă мĕн чухлĕ пулнине асăрхасах тăмала. Вăрлăх ăшĕнчи температурă Цел̦си градусникĕпе 10—12 градусран ытла пулса кайат пулсан, вăрлăха пăтратса сӳхерехрĕн сарма кирлĕ. Температурă 10—12 градус тăрсан, йулашки хут нӳретнĕ хыççăн 15—20 сехет иртнĕ тĕле хăшпĕр пĕрчĕсем сăмсаланма пуçлаççĕ.

Çемçе суртлă çурхи тулă вăрлăхне йаровизацилемели йĕрке

Виççĕмĕш хут нӳретнĕ хыççăн, вăрлăх ăшĕнчи температурăна 10—12 градус тĕлĕнче тытса тăмала. Температурă 15 градусран иртсе кайат пулсан, вăрлăх купине сӳхелетмеле йе пăтратса илмеле. 8 градусран сивĕрех пулни те сийенлĕ.

Вăрлăха нӳретме тытăннă кунран 3—4-мĕш кунне те сăмсаланнă пĕрчĕсем 3 процентран кайа пулсан, вара кашни центнĕр вăрлăх çине 1—2-шер литр тепĕр хут шыв сирпĕтсе нӳретме кирлĕ пулат. Ун хыççăн вара вăрлăх сăмсаланма пуçланине асăрхасах тăмала, сăмсаланнă пĕрчĕсем 3—5 процента çитсенех, вăрлăх ăшĕнчи температурăна 2—5 градус таран çеç хăвармала.

Çурхи тулă вăрлăхне йаровизацилес ĕçе уй ĕçне тухиччен (кĕрсухи тунă вырăна сӳреме тухиччен) 1—3 кун малтан тытăнмала. Акма тухсан кашни купра мĕн чухлĕ акма пултарнине шута илсе, кашни кун çавăн чухлĕ йаровизацилесе тăмала. Тулă вăрлăхĕ 5—7 кун хушшинче йаровизациленсе çитет.

Сĕлĕпе урпа вăрлăхне йаровизацилесси

Йулашки хут нӳретнĕ хыççăн сĕлĕпе урпа вăрлăхне 15—20 сехет хушши 10—12 градусра тытса тăмала. Çавăн хыççăн, сăмсаланма тытăннă пĕрчĕсем 3—5 процента çитессе кĕтмесĕрех, вăрлăх ăшĕнчи темпаратурăна 2—5 градус таран çеç хăвармала. Температурăна сахаллатас тĕлĕшпе вăрлăх купине пăтратса сӳхелетмеле те, çил çинче лайăххăн уçăлтармала. Çавăн пек температурăра, 2—5 градусра, вăрлăха 10—14 кун хушши тытса выртармала. Çав вăхăтра вăрлăх купине куллен темиçе хут пăтратма кирлĕ. Температурă 5 градусран ăшăрах пулсан, вăл вăрлăха йаровизациленме чармасĭ, анчах та ун пек чухне вăрлăх ытлашши шăтса кайас хăрушлăх пулат. Унсăр пуçне тата вăрлăх хĕрсе кайнипе пăсăлма та пултарат.

Вăрлăх йаровизациленсе çитнĕ хыççăн, ăна ретлĕ акакан çейăлкăпа акмала. Уйа тухма вăхăт çитеймен пулсан, йаровизациленсе çитнĕ вăрлăха сӳхерехрĕн сарса куштарса выртармала.

Сĕлĕпе урпа вăрлăхне уй ĕçне тухиччен (кĕр сухине сӳреме тухиччен) 3—5 кун малтан тытăнмала.

Йаровизациленĕ вăрлăхсене акмали норма

Йаровизациленĕ вăрлăх нӳрĕрех пирки йаровизацилемен вăрлăхран шултăрарах пулат. Çавăнпа та йаровизациленĕ вăрлăха акма çейăлкăсене йатарласа майлаштарса лартма кирлĕ, мĕншĕн тесен, йăвăрĕш йенчен йаровизациленĕ вăрлăх йаровизацилеменнинчен йывăртарах пулат, çавăнпа та акакан катушкăна ăна валљи ытларах уçма кирлĕ.

Практикăра колхозсем ун пек чухне çейăлкăна çапла майпа майлаштарса лартаççĕ: йаровизацилемен вăрлăх нормине тăрăх малтан çейăлкăна тĕрĕс майлаштарса лартаççĕ те, çейăлкăн пĕр сошникне уçă хăварса (ыттисене питĕреççĕ) 15 метр тăршшĕ туртса акса пăхаççĕ. Çавăн хыççăн мисе пĕрчĕ акăннине шутласа илеççĕ те, йаровизациленĕ вăрлăх йарса акса пăхаççĕ. Катушкăсене кăшт аслăлатсан, йаровизациленĕ вăрлăх пĕрчи хисепĕ те çейăлкăна 15 метр хушши туртсан йаровизацилемен вăрлăх пĕрчисем тăкăннă чухлех тăкăнат пулсан, вара çейăлкăна тĕрĕс йĕркеленĕ темеле.

Йаровизациленĕ вăрлăха катушкăран çул йенчен кăларттарса ымала туса майлаштармала.

Катушкăна аслăлатсан та йаровизациленĕ вăрлăх кирлĕ чухлĕ акăнмасĭ пулсан, вара çейăлкăна хĕреслĕ акмала туса йĕркелемеле. Апла пулсан та кирлинчен сайрарах акăнмала мар тума тăрăшмала.

Çурçĕр полђусне çĕнтерсе илекенсем Сталино хулинче

СТАЛИНО, апрелĕн 10-мĕш. (ТАСС). Пайан Донбас столици—Сталино—хаклă хăнасене, Çурçĕр полђусне хăйулăн çĕнтерсе илекенсене—папанинĕцсене кĕтсе илнĕ.

Кăнтăрла 3 сехетре папанинĕцсемпе килекен пуйăс хулана çитнĕ.

Геройсене вуншар пин ĕççынни сем кĕтсе илнĕ.

Митингра облĕçтавком председателĕн ĕççесене туса пыракан Шпилевой йулташ, çĕршывăн паллă трактăриски, ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутачĕ Паша Ангелина, Донбасри паллă стахановĕцсем, ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутачĕсем Мирошниченкопа Застава йулташсем сăмах тухса калаçнă.

Папанин, Кренкĕл тата Федăрăв йулташсем митингра сăмах каланă чухне, пухăннă ĕççыннисем вĕсене тăвăллăн алă çупнипе тата „урра“ кăшкăрнипе саламланă.

Вырăссен аслă драматургĕ

(А. Н. ОСТРОВСКИЙ ÇУРАЛНИ 115 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ ТĔЛЕ)

Апрелĕн 11-мĕшĕнче вырăссен чи аслă драматургĕ Александр Николаевич Островский вилни 115 çул тултарчĕ.

Унăн произведенийĕсем (50 пйеса ытла) вырăс театрне вăйланса пыма калама çук пысăк пулăшу панă. Совет Союзĕнчи йĕртсе пыракан драмă театрĕ—Пĕчĕк театр хăйĕн творчествине Островский драматургийĕпе, унăн вилми произведенийĕсене хăйĕн репертуарĕнче усранипе, тăччăн çыхăнтарса пырат. Островский хăйне хупăрласа тăнă чăплăха, хăйне хупăрласа тăнă „тĕттĕм патшалăха“ тĕрĕс ўкерсе пама пултарнă. Островский драматургийĕн хаклăрах та хаклă йенĕсене революцилĕ демократин чаплă представителĕ Н. А. Доброђубăв, чи малтанхи хут темеле,-паллă тунă.

Островский социаллă çивĕч характеристикă парса мапми образсен галлорейине тунă. Ку образсем вырăссен аслă драматургĕнчен йулса çумай пурăнаççĕ.

(ТАСС).

Пианиссен пĕтĕм тĕнчери конкурсĕ умĕн

Пианиссен Ежей Изаи йачĕпе Брўççĕлре пулса иртмели пĕтĕм тĕнчери конкурсĕ пуçланиччен вăхăт уйăх ытларах çеç йулчĕ. Условисем тĕлĕшĕнчен пит те нумай йенлĕ çак конкурса совет пианиссем 4 çын—Йакăв Флийер, Емил Гилеђс, Исаак Михновский тата Павел Серебрйаков хутшăнаççĕ. Пианискă Розă Тамаркинă. Брўççĕле каймала пулнăскер, конкурса хутшăнма пултараймаст, мĕншĕн тесен унăн халђхи вăхăтра алли чирлĕ.

— Епĕр пурте,—тенĕ пианист-орденоносец Йакăв Флийер ТАСС сотрудникĕпе калаçнă чух,—халђхи вăхăтра пĕтĕм тĕнчери ăмăртăва тăрăшса хатĕрленетпĕр. Епĕр тĕпрен илсен пĕтĕм программăна хатĕрлесе çитерпĕ.

***

Çак кунсенче, Мускавра, конкурс условисенчен пĕрне тĕплĕн кăтартса паракан пĕлтерўсем илнĕ. Оргкомитет конкурсăн вуникĕ ларуĕчĕ валђи çакăн пек премисем палăртса çирĕплетнĕ: пĕрремĕш премия—50 пин франк (Белђгири укса-тенкĕ шучĕ), иккĕмĕш премия—25 пин франк, виççĕмĕш—20 пин франк, тăваттăмĕш—17 пин франк, пиллĕкĕмĕш премия—15 пин франк.

(ТАСС).

ССРС Оборонине тĕреклетмели займ облигацийĕсене подписчиксене парасси

Апрелĕн иккĕмĕш çуруйăхĕнче рабочисемпе служăщисем хăйсем ССРС Оборонине тĕреклетмели займа çырăнша тăрăх йулашки взноссене тўлесе татаççĕ. Йулашки взноса тўлесе татнă хыççăн предприйатисемпе учрежденисен бухгалтерийĕсем подписчиксене облигацисем пама тивĕç, вĕсем подписчик займа çыраннă чухне мĕнле кăларăма çырăннă, мĕнле облигацисем (пысăккĕш тĕлĕшĕнчен) çырăннă—çавна пама тивĕç.

Хăйсен ĕç вырăнне улăщтарнă тата хăй çыраннă вырăнта облигацисене илмен подписчиксен облигацисене займа çыраннă предприйати бухгалтеринчен пырса илес пулат, йе облигацисене почтăпа йарса пама хăйсен адрĕсне çав предприйати бухгалтерине пĕлтерес пулат; çакна майăн 20-мĕшчен тумала.

Колхозниксене тата йединоличник-хресченсене облигацисене йалсоветĕсем, йулашки взноса тўленĕ хыççăнах, анчах 1938 çулхи майăн 1-мĕшĕнчен кайа йулмасăр параççĕ.

Подписчиксем илмесĕр йулнă облигацисене перекет кассисене параççĕ, вăл облигацисен номĕрĕсене подписчиксем сумне çирĕплетмеççĕ. Хăйсен облигацисене алла илмен подписчиксем займ тăрăх пулакан выђав тиражĕсене хутшăнма пултараймаççĕ.

ССРС Оборонине тĕреклетмели займ тăрăх 1938 çулта 4 тираж пулат. Пĕррэмĕш тираж ийунĕн 5-мĕшĕнче Минскра пулат, иккĕмĕш тираж—ийулĕн 11-мĕшĕнче Сталинскра, виççĕмĕш—çентăбĕрĕн 11-мĕшĕнче Одессăра, тăваттăмĕш—декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Рйазаңре.

ССРС Финанс халăх комиссариачĕ çавăн пекех тата кăçал Иккĕмĕш пилĕкçуллăх (4-мĕш çулхи кăларăм) займ тăрăх выђав тиражĕсем пулса иртмели срукесене те çирĕплетсе хунă. Выђавсен çиччĕмĕш тиражĕ майăн 17-мĕшĕнче Хусанта пулат, саккăрмĕш—августăн 17-мĕшĕнче Свердловскра, тăххăрмĕш—нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче Ташкентра пулат.

(ТАСС).

„СССР В-8“ дирижаблђĕн çĕрлехи вĕçевĕ

Апрелĕн 9-мĕшĕнче 19 сехет те 07 минутра Мускав патĕнчи дирижаблђ портĕнчен „СССР В-8“ дирижаблђ Мускав—Клин—Калинин—Бологойе—Ленинград маршрут тăрăх çĕрлехи ханăхулă вĕçеве тухса кайнă. Сывлăш карапĕнчи екипаж составĕнче 13 çын. Вĕсен командирĕ çамрăк пилот В. И. Почекин йулташ.

Çанталăк условисем начар пулнине пăхмасăрах (йур çуни, пĕлĕтсем айалтан çўрени, сехетре 30 километр хăвăртлăхпа хирĕçле çил вĕрни)—„СССР В-8“ дирижаблђ 8 сехет те 30 минутра апрелĕн 10-мĕшĕнче Ленинграда аванах çитсе тухнă.

Дирижаблђĕн материаллă пайĕсем вĕçнĕ чухне пĕр чăрăнмасăр ĕçленĕ.

Дирижаблђ çинчи çынсем хăйсене лайăх туйаççĕ. (ТАСС).

Коломенскри В. В. Куйбышĕв йачĕпе тăракан машинсем тăвакан савăт çĕнĕ формăлă пăравус туса пĕтерчĕ. Вăл пăравус çунтармали йапаласене нумай перекетлеме май парат.

Ўкерчĕк çинче: çлесăрсем Н. И. Голубков тата Н. Г. Федотăв йулташсем пăравусăн йулашки ĕçĕсене тăваççĕ.

В. Олейник фото-ўкерчĕкĕ (Сойузфото).

Йапонĕцсене Шаңдунре çĕмĕрсе тăкни

(Китайри вăрçăн ерне хушшинчи ĕçĕсене пăхса тухни)

Халђхи вăхăтра Китайра активлă вăрçă ĕçĕсем пуринчен ытла çурçĕр йенче—Шаңдун провинцинче пулса пыраççĕ. Китайăн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче (Шаңçире) нимĕнле çитĕнў те тăвайман пирки, Йапони командованийĕ Таңцзин—Пукоу чукунçулĕн çурçĕр участки çине ытларах тапăнса пыма пуçларĕ. Йапонĕцсен чи çывăх тĕллевĕ—Çуйчжоу хулине туртса илесси пулнă, Çуйчжоу вăл—Таңцзин—Пукоу чукунçулĕпе Лунхай çулĕ пĕрлешнĕ тĕлте стратеги йенчен кирлĕ пункт пулса тăрат. Лунхай чукунçулĕ Китай урлă хĕвелтухăçĕнчен хĕвеланăçнеле каçса кайат. Çуйчжоу хулине туртса илес пулсан, йапонĕцсем Китай çарне снабжени центрĕнчен татса илнĕ пулĕччĕç тата хăйсен çурçĕртипе кăнтăрти колоннисене пĕрлештернĕ пулĕччĕç.

Анчах та, йапонĕцсем Çуйчжоу хулине туртса илме пултараймарĕç.

Çуйчжоу таврашĕнче çур уйăх хушши çапăçусем пыраççĕ ĕнтĕ. Йапонĕцсен кашни атакине Китай çарĕсем татăклă отпор панă.

Март уйăхĕн вĕçĕнче Китай çарĕсем йапонĕцсене чылай хутчен пысăккăнах çĕмĕрсе тăкма пултарчĕç, çавăнпа та Йапони командованин çапăçусен районне ытти фронтсенчен ирĕксĕрех темиçе дивизи илсе пыма тиврĕ. Апрел пуçламĕшĕнче Тайерчжуан патĕнче (Çуйчжоуран 50 километр çурçĕрĕле) хайар çапăçусем пуçланчĕç. Çавăн пекех Китай командованийĕ те фронтăн çак участкине çĕнĕ подкрепленисем, вăл шутран артиллерипе танк часĕсем йанă. Апрелĕн 6-мĕшĕнче Китай çарĕсем наступлени тума пуçланă тата, ăнăçлăн çавăрăнса пырса, Йапонин икĕ дивизине хупăрласа илнĕ. Вăйлă та хайар çапăçура Йапони çарĕсене çуррине пĕтерсе хунă.

Ку вăл—Китай çарĕсем Шаңдунре тунă малтанхи пысăк çитĕнў. Темиçе кун хушши пынă çапăçусенче кунта йапонĕцсен вилсе тата аманса 20.000 çын çухалнă. Китай чаçĕсем 500 йапонĕца тыткăна илнĕ, 20.000 винтовкă, 931 пулемет, 77 тупă тата вăрçă хатĕрĕсем нумай туртса илнĕ.

Халђхи вăхăтра Йапони командованийĕ мĕн пур фронтсенчен Тайерчжуан патне васкасах подкрепленисем йарат.

Китай çарĕсем çĕнтерни çинчен пĕлтернĕ хыпар йапонĕцсен тылĕнче партизансен йухăмне çĕнĕрен çĕклентерсе йанă. Партизан отрйачĕсен активлăхĕ ўсни çинчен пур провинцисенчен те çведенисем килеççĕ. Партизансем пуринчен ытла Йапони тылĕсене пысăк сийен кўреççĕ, Йапони çарĕсем валђи фронт линине вăрçă хатĕрĕсемпе подкрепленисем йама чарса тăраççĕ.

Центрти Китайра вăрçă ĕçĕсем Шанхайран кăнтăрала Ханчжоу таврашĕнче пулса пыраççĕ. Китайĕцсем темиçе хула туртса илнĕ, халђ Хаңчжоу патнеле çывхарса пыраççĕ. Фуйан хули таврашĕнче хайар çапăçусем пулса иртнĕ, унта йапонĕцсен вилсе тата аманса 1.700 çын çухалнă. Шанхай патĕнче партизансем активлăн çапăçни йапонĕцсене пысăккăн шиклентерет. Йапонĕцсем хула тавра васкасах укрепленисем тăваççĕ.

Совет Союзĕ тăрăх

●● Апрелĕн 5-мĕш тĕлне колхозсем 156.800 гектар сахăр кăшманĕ акнă, вăл иртнĕ çулхинчен 85.800 гектар ытларах пулат. Плана 14 процент тултарнă. Молдави АССР сахăр кăшманне акса пĕтернĕ.

●● Мускав облăçĕнчи Бронницк, Дмитровск тата ытти районсенчен 1.500 колхозник Мускава екскурçине пынă. Вĕсем Мускавăн паха та илемлĕ вырăнĕсене курса çўренĕ тата музейсенче пулнă. Апрелĕн 10-мĕшĕнче каçхине колхозниксем йалхуçалăх йенĕпе ĕçлекен учонăй-специалиссемпе тĕлпулса калаçнă.

●● „Красное Сормово“ савăтăн Горький инструменталђнăй цехĕнче токăр-стахановĕц Мамыкин йулташ, майăн 1-мĕш йачĕпе социалисăмлă ăмăртăва хутшăнса, çĕнĕ рекорд тунă. Апрелĕн 8-мĕшĕнче, фрезăсем тунă чухне, вăл нормăна 940 процент тултарнă.

(ТАСС).

Мобилизацилеме ыйтса

— Испанири транспăртниксен професçилĕ сойузĕ правителствăран пĕтĕм транспăрта вăрçă чухнехи лару-тăрува куçарма тата сойузăн 45 çулхи таран мĕн пур членĕсене мобилизацилеме ыйтса йышăннă.

(ТАСС).

Суту-илў хыпарĕсем

■■ Шупашкарти „Бакалей“ магазинĕ тĕрлĕ йышши премĕк, канфеткă таврашсем икĕ вакун, апелçинпа лимон 2 вакун кўрсе килнĕ. Шурă çăнăх, халва, повидлă, тĕрлĕ йышши кĕрпесемпе тутлă çимĕçсем çителĕклĕ. Çитес кунсенчех Горькинчен пулă тата пахча-çимĕç конçервисем кўрсе килмеле.

■■ Чебторг тĕрлĕрен апат-çимĕç продуктисем чылай илсе килнĕ. Кунсăр пуçне Чебторг хулари ларйоксемпе киоскăсен шутне ўстерет. Майăн 1-мĕш тĕлне 20 киоск çĕнĕрен тăваççĕ. Вĕсенче тĕрлĕрен çимĕççемпе тутлă шывсем сутмала.

Çĕнĕ киоксенче сутă тума йатарласа уçнă çур уйăхлăх курсра 28 çынна вĕрентеççĕ. Вĕсем пурте килђхуçи хĕрарăмсем.

■■ Йалсенче ку таранччен апелçинпа лимон сутман, халĕ бакалей магазинĕ пĕр вакун районсемпе колхозсенчи лавкасене йарса парат.

„Камсем вĕсем Филиппăвсем“

То карĕв йалкор Пушнар йаленчи (Йетĕрне районĕ) Филиппăв Васили тутарсемпе çпекуђаци туса пурăнни тата вăл Некрасăв Михаилпа хулиганла ĕçсем туса çўрени çинчен çырнăччĕ.

Çак заметкăна Йетĕрне милици тытăмне тĕрĕслеме йанă хыççăн заметкăри фактсем тĕрĕсси куранчĕ. Филиппăвпа Некрасăва УК 74-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе тата 105 статйипе айăпласа уголовнăй ĕç пуçарнă.

Атăл çинче

АПРЕЛĔН 11-мĕшĕнче АТĂЛ ПĂРĔ КАЙМА ПУÇЛАРĔ.

ИЗВЕЩЕНИЕ

На заседание выездной Центральной парттройки Комиссии Партийного Контроля при ЦК ВКП(б), имеющее быть 15—16 апреля 1938 года в г. Канаше в здании Райкома ВКП(б), для разбора апелляций вызываются следующие товарищи:

15 апреля к 10 часам утра

1. Сильвестров Иван Иванович. Исключен Канашским РК ВКП(б), г. Канаш, ВРЗ.
2. Суранов Кузьма Емельянович. Исключен Канашским РК ВКП(б), с. Тобурданово, Канашского района.
3. Максимова Марина Петровна. Исключена Канашским РК ВКП(б), г. Цивильск, ул. Ленина, дом № 16.
4. Моксев Матвей Васильевич. Исключен Канашским РК ВКП(б), с. Пошнары, Ядринского района.
5. Рутте Петр Михайлович. Исключен Канашским РК ВКП(б), г. Канаш, ВРЗ, ул. Ильича, дом № 14, кв. 4.
6. Желестов Тимофей Капитонович. Исключен Канашским РК ВКП(б), г. Канаш, ВРЗ, ул. Ильича, д. 5, кв. 6.
7. Иванов Петр Иванович. Исключен Канашским РК ВКП(б), Вурнары, леспромхоз.
8. Алексеев Петр Алексеевич. Исключен Канашским РК ВКП(б), д. Иваново, Янтиковского района.
9. Катрамов Василий Петрович. Исключен Канашским РК ВКП(б), д. Вурман-Кибеки, Ямашское п/о, Шихазановского района.
10. Бройт Захар Моисеевич. Исключен Канашским РК ВКП(б), г. Канаш, дом ж/д работников, № 51, кв. 4.
11. Либерман Мася Давыдовна. Исключена Канашским РК ВКП(б), г. Канаш, дом ж/д работников, № 51, кв. 4.
12. Чижов Михаил Александрович. Исключен Шихазановским РК ВКП(б), Шихазаны, прокуратура.
13. Ванеркке Евдокия Дмитриевна. Исключена Шихазановским РК ВКП(б), г. Чебоксары.
14. Лаврентьев Александр Лаврентьевич. Исключен Шихазановским РК ВКП(б), д. Тузи-Чурино, Шихазановского района.

16 апреля к 10 часам утра

1. Иванов Семен Иванович. Исключен Янтиковским РК ВКП(б), п/о Толиково, Чебоксарского района, д. Чигирь.
2. Яковлев Георгий Яковлевич. Исключен Яльчиковским РК ВКП(б), д. Тюмерово, Янтиковского района, учитель НСШ.
3. Афиногенов Макар Афиногенович. Исключен Вурнарским РК ВКП(б), Вурнары, детсанаторий.
4. Конюшенко Дмитрий Евгеньевич. Исключен Вурнарским РК ВКП(б), Арзамас, ул. М. Горького, дом № 67.
5. Милиндеев Иван Степанович. Исключен Ибресинским РК ВКП(б), Ибреси, Райпрокуратура.
6. Савруков Арсений Александрович. Исключен Ибресинским РК ВКП(б), Ибреси, лесхоз.
7. Окулов Георгий Филимонович. Исключен Ибресинским РК ВКП(б), Чебоксары, Обком ВКП(б).
8. Павлов Никифор Павлович. Исключен Ибресинским РК ВКП(б), Буинск, сланцевый рудник.
9. Светлов Александр Владимирович. Исключен Козловским РК ВКП(б), Козловка, Кинотрест Чувашкино.
10. Николаев Василий Николаевич. Исключен Урмарским РК ВКП(б), п/о Урмары, д. Чубаево.
11. Григорьев Семен Григорьевич. Исключен Урмарским РК ВКП(б), Урмары, отделение Госбанка.
12. Степанов Андрей Степанович. Исключен Урмарским РК ВКП(б), д. Баишево, Урмарского района.

ПАРТКОЛЛЕГИЯ.

Ответлă редактăр Н. М СЕМЕНАВ.

ССР СОЙУЗĔН ГОССТРАХ ТĔП УПРАВЛЕНИЙĔ

çакăн пек пурлăхсене ирĕклĕн страхлама ирĕк панă:

1. Йалсовет, район тата республикă (АССР) бўджечĕ çинче тăракан учрежденисен тата вĕсен аллинче тăракан предприйатисен пурлăхĕсене, тепĕр майлă каласан: ĕçхалăх депутачĕсен вырăнсенчи совечĕсен пурлăхĕ, вырăнти вăрман хуçалăхĕ, коммуналлă хуçалăх пайĕсен, благоустройствăпа коммуналлă предприйатисен, автогужтранспăртăн, утиђзаводăн, мунчасен, кĕпе-тумтир çумалисен, гостиницăсен, общежитисен тата ыт. те.

2. Вырăнти бўджет çинче тăракан, çавнашкалах республикă (АССР), район йе йал бўджечĕ çинче тăракан Социаллă-културăлă учрежденисен тата вырăнти бўджет çинче тăракан хуçалăх организацисен-библиотекăсем, клубсем, вулав çурчĕсем, шкулсем, техникумсем, ача йаçлисем, кану çурчĕсем, поликлиникăсем, амбулаторисем тата ыт. те.

3. Республикăна, района, йе йалсоветне пăхăнса тăракан промышлĕннăçлă предприйатисен пурлăхĕсене.

4. Вырăнсенчи, районсенчи тата республикăри (АССР) суту-илў организацисен пурлăхĕсене.

Çўлте асăннă учрежденисемпе организацисен кирек мĕнле пурлăхне те страхлама йышăнаççĕ, уйрăмăн: çурт-хуралтсем, предприйатисем тата вĕсенче производствăра выртакан чĕрĕ таварсем, тĕрлĕрен йапаласем тата складсенчи таварсем.

	Кашни 100 тенкĕрен илмели тариф (пуспа)	
	Хуласенче	Хула мар вырăнсенче
1. Чул çуртсемшĕн тата вĕсен ăшĕнчи пурлăхшăн	10	25
2. Йăвăç тата ытти хутăшлă çурт-йĕрсемшĕн	20	40
3. Социаллă-културăлă çуртсемшĕн	6	10

Театрсемпе кино çурчĕсене страхлавăшăн кашни 100 тенкĕшĕн тариф 20 тенкĕрен 80 тенкĕ таран пулат. Промышлĕннăç предприйатисен çурчĕсене страхланă чух вĕсем вута парăннипе парăнманнине шута илсе страхлаççĕ, тариф кашни 100 тенкĕшĕн 25 пусран 1 тенкĕ те 60 пус таран пулат.

Таварсене страхланă чух вĕсем мĕнлине тата ăçта выртнине кура тариф 30 пусран 90 пус таран пулат.

Тариф çинчен хулари тата районри страховой инспекцисенче тĕплĕн пĕлме пулат.

Пурлăха страхланă чух заявленийĕ икĕ екземпђар (Госстрах оргăнĕ кăларнă формă тăрăх) çырса районри страховой инспекцине памала.

Чăваш АССР Госстрах Управлени.

ХИМИ ТАВАРĔСЕН МАГАЗИНĔ

Йăвăр промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн „Главхимпромĕн“ Горькинчи кантурĕ

Горький хули, Кооператив урамĕ, № 39.

КУЛЛЕНХИ ПУРНĂÇРА ХИМИПЕ УСĂ КУРĂР!

Есĕр „Главхимпромăн“ минерал-удобренисен хутăшĕсене илсе усă куратăр пулсан,

СИРĔН пўлĕмсенчи чечексем хăвăрт, çўлĕ ўссе, ырă шăршăсем пама пуçлаççĕ.

СИРĔН пўлĕмри çырла-çимĕç йăвăççисем пысăк тухăçлăх параççĕ.

СИРĔН чечек пахчисем, йăрансем пĕтĕм çулахи вăхăт хушши чечеклĕ пулаççĕ.

СИРĔН сатри улма-çырла йăвăçĕсем нумай тухăçлăх пама пуçлаççĕ.

СИРĔН сат пахча-çимĕçĕсем, çырласем, çарăк-кăшмансемпе ытти çимели йапаласем хушăнса пыраççĕ.

Магазинран çаксене ыйтăр:

ПРИМУЛАТ—пўртри ўсен-тăрансем валђи . . . 100 гр.—0 т. 40 п.
ЦИТРУС—лимонсемпе апелђçинсем валђи . . . 100 гр.—0 т. 40 п.
ФРАГАР—çĕрçырлипе хурăн çырли валђи . . . 500 гр.—1 т. 25 п.
КЛУМБАТ—йăран çинчи чечексем валђи . . . 500 гр.—1 т. 25 п.
ОГОРОДНАЯ—пахча-çимĕçсем валђи . . . . . . 1 кгр.—1 т. 90 п.
ФЛОРАТ—чечек пахчисем валђи . . . . 1 кгр.—2 т. 00 п.
ФРУКАТ—улма-çырласемпе çырла йăвăççисем валђи 1 кгр.—1 т. 90 п.

Кăтартнă имçамсемпе мĕнле усă курмали çинчен вĕсемпе пĕрлех хут çине кăтартса панă.

Суту-илў тăвакан организацисем илеççĕ пулсан—20 процент йўнетсе параççĕ.

Заказ панă тăрăх имçамсене кĕске вăхăтрах йарса параççĕ.

Уйрăм çынсен заказĕсене почтăпа тўлесе илмеле йараççĕ.

Магазин дирекцийĕ.

Чирлĕ çынсене йун йама харпăрхăй йунне пама килĕшекенсен

Шупашкар болђницине пымала.

Унта хирурги уйрăмĕнче кашни кунах кăнтăрла 2 сехетпе 3 сехет хушшинче йышăнаççĕ.

Йун илни сывлăха сийен тумаст.

Çав сехетрех телефон тăрăх калаçса татăлма пулат—№ 5-40.

Академи театрĕнче

Апрелĕн 12-мĕшĕнче

Чăвашла спектаклђ

П. Н. ОÇИПĂВ

„АЙДАР“

(5 пайлă, прологлă)

Аслă режиççор **К. И. ИВАНОВ**

тата режиççор **Н. С. АЙЗМĂН** лартаççĕ.

Художник **Йе. Н. САПОЖНИКĂВ.**

Çпектаклђре музыкăна Государствă филармонийĕ выђат.

Дирижор—Г. ЙЕГОРĂВ.

Талон № 164.

Абонемент № 1 талон № 15.

Кассă кăнтăрла 3 сехетрен уçă. Çпектаклђ каçхине 8 сехет те 30 минутра пуçланат.

Медсантруд профсойузĕн Облăçри комитетне

Машинисткă кирлĕ.

Канаш урамĕ, Сойузсен çуртне пымала.

2—1

Çĕмĕрлери райпромкомбината

ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ КИРЛĔ:

Аслă бухгалтĕр 1

Инженер-механик 1

Плановик-економист 1.

Хватер пур. Ĕçукçи килĕшў тăрăх.

Дирекци.

3—1

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 185. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 301. Тираж 16.250 экз. П. 6. 85—94 см. 1—1 п. л.